Ф 33
Ч-42884

Георгий Федоров

# ЛЕОНИД АГАКОВ: сăнарлă пултарулăх çулĕ-йĕрĕ

Монографи



Национальная библиотека ЧР
4-042884

Обязат. экз.

## Георгий Фёдоров

# Леонид Агаков: сăнарлă пултарулăх çулĕ-йĕрĕ

***(Чăваш литературин теориллĕ историйĕ енчен хак пама сĕмленни)***

*Монографи*

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2010

УДК 821.512.111.0
ББК 83.3(2Рос=Чув)
Ф 33

*Монографире чăваш халăх писателĕн Л.Агаковăн илемлĕ ăсталăх ыйтăвĕсене пăхса тухнă.*

*Кĕнеке филологи факультечĕн студенчĕсене, аспирантсене, тĕпчевçĕсене усăллă пулма пултарать.*

*Ăслăлăх редакторĕ - филологи ăслăлăхĕсен докторĕ В.Г.Родионов профессор.*

*Рецензентсем:*
*П.Н.Метин, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор;*
*Н.Н.Осипов, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Федоров Г.И.
Леонид Агаков: сăнарлă пултарулăх çулĕ-йĕрĕ. Монографи. – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2010. – 60 с.

ПРОВЕРЕНО
20/31 МАР 2

Ч-42884

© Федоров Г.И., 2010

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА

## Умсăмах

Иртнĕ ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурри литература пĕлĕвĕшĕн питĕ тухăçлă пулчĕ. Этеплĕ (гуманитариллĕ) ытти ăслăлăхсем пекех, литература пĕлĕвĕпе историйĕ те чылай енчен çĕнелчĕ. Унччен критерисем пур чухне те тĕрĕс пулманни курăнчĕ. Халиччен пысăк пĕлтерĕшлĕ шутланнă пулăмсем самай шупкалчĕç. Япăх, талантсăр тесе хакланă хайлавсем, хăйсен чăнласах мал ĕмĕтлĕ екки-чиккине кăтартрĕç. Сăмахлă культурăсене витĕм кўрсе тăраканнисем (вырăс, акăлчан...) тата çав витĕмпе аталанаканнисем (чăваш, çармăс...) çине пайлас йăла пăрахăç пулчĕ. Кашни халăх культури хăйне майăн, ыттисеннипе пăтрашми опыт пухни кĕретленчĕ. Çак опыта тĕнче литератури шайĕнчи, пĕтĕмĕшле, топологиллĕ енсемпе шайлаштармалли тĕпе ларчĕ. Апла пулин те, пĕчĕк йышлă халăх культурине те ун хăйхаллĕхне шута хывса хакламалли мала тухрĕ. Куна ĕнтĕ сăмахлăха хăйне çеç асра тытнипе мар, культура контексчĕпе çураçтармалла.

Сăмахлăх теорине килнĕ çак ăнлав-виçе уйрăммăнах Д.С.Лихачев академик ĕçĕсенче тивĕçлĕ вырăн тупрĕ. Литература историне традициллĕ йĕрпе çырассине пăрахăçлама сĕнчĕ тĕпчевçĕ, литературăн теориллĕ историне çырмаллине кăтартрĕ вăл хăйĕн «Развитие русской литературы X-XVII веков" кĕнекинче (1978). Каярах ку ыйту Ю.Б. Виппер тĕпчевĕсенче тивĕçлĕ вырăн йышăнчĕ (творческие судьбы и история о западноевропейских литературах XVI – первой половины XIX века. 1990). Лихачев шухăшĕпе, истори çырнă чух (сăмах теориллĕ истори çинчен пырать) сăмахлă культурăри пулăмсене вĕсен пĕтĕмĕшле паллисем енчен тĕпчемелле. Кун пек чух автор вырăнĕ самай чакма та пултарать. Виппер урăха ĕненет – юхăм-туйăма шайлаштарса-танлаштарса тĕсемелле. Кун пек чухне, тет тĕпчевçĕ, типологиллĕ енсене те, нациллĕ уйрăмлăхсене те асра тытмалла. Сăмахлă культурăна ытти

искусствосемпе хутшăннă енчен те сăнамалла. Ку çаплахтăр: чăваш халăх писателĕ А.Артемьев, тĕслĕхрен, музыка, кĕвĕ поэтикине мал ĕмĕтлет, юрă-кĕвĕ ун хайлавĕсен анлăш-талккăшне, эстетика тытăмне шăнăçлать. Кунашкал стиль пулăхĕ Л.Агаковăн та тĕл пулать. «Куккук», «Юрă пурпĕр янăрать» (Хĕр юрри) новеллăсенче вăл та кĕвĕ енне тайăлать. Чăн та, Агаков юрăлăха хăйĕн пĕтĕм пултарулăхĕн никĕсне выртмасть, ун пуянлăхне хăш-пĕр калав-новеллăшăн кăна юраттарать. Сăмах май: Хв.Уярпа М.Илпек, И.Тăхти XX ĕмĕрте пысăк пĕлтерĕш тупнă монташ поэтикине (кино чĕлхи) кăмăлласçĕ. Паллах, кун пек тĕпчев литературăн культурăллă контекстне самай пуянлатать.

«Теория персональных моделей в истории литературы» монографире (2006) Вл. А.Луков академик тата тепĕр уйрăмлăх çине пусăм тăвать. Вăл шутланă тăрăх, хăй вăхăтĕнче традициллĕ историе те уйрăм персоналисем çине таянса çырнă. Академик çакна ĕнентерет: пĕр-пĕр çыравçă тепĕр классик-çыравçа евĕрлесе илет. Евĕрлемелли калăпсем (модель) хывакан ăстасем хушшинче тĕнче культурине сĕтек парса тăракан авторсем. Шекспир хывнă (Европăри романтизмшăн кирлĕ, А.С.Пушкинăн «Борс Годуновĕшĕн»), Пушкин, Лермонтов, Гоголь ... калăпĕсем. Тĕлĕнме кирлĕ мар, А.Артемьев И.С.Тургенев калăпне евĕрлет (пĕрлех, Агаков та), Л.Агаков А.П.Чеховпа Н.В.Гоголь калăпне т.ыт.те. Малтанхи писатель унăн лирикăлăхĕшĕн, кайранхи икĕ çыравçă сатиришĕн ырă. Майн-Рид, Ф.Купер та Агаковшăн кирлĕ матрицăсем хывнă, ăна детективпа, приключенипе пулăхлăн паллаштарнă. Куна кура, пирĕн умра литература историйĕнчи персонали калăпĕсен теорийĕ хывăна пуçлать.

2001 çулта тухнă «Теория литературы» ĕçĕн IV томĕнче Ю.Борев тĕнче литературинчи кăтартуллă тĕрлĕ юхăмсене (классицизм, сентиментализм, романтизм...) литературăн теориллĕ историйĕ теме сĕнет. Ку шухăш Випперпа Лихачев концепцийĕсене аса

илтерет. Ю.Минералов тĕпчевçĕ шухăшĕ кăсăклă. «Теория художественной словесности учебникра (1999) вăл литературăн теориллĕ историне пултарулăх процесĕсен хăйне евĕрлĕхĕнче, уйрăм авторăн никамăннипе те пăтрашман стиль хăйне евĕрлĕхĕнче курать. Тĕпре кунта – поэтика тата писателĕн стиль харкамлăхĕ. Ку тĕрĕсрех те-и-ха ак.

Чăваш литературин теориллĕ историне хăрталама пĕтĕм тĕнчери эптеплĕ ăн контекстне те шута хумалла, паллах, анчах хучизм, кубизм йышши туртăмсем пирĕн халăхăн сăмахлăхĕшĕн, тен кăтартуллах та мар пуль. Ман шутпа çыравçăн харкамлă стилĕ этнопоэтикăпа çыхăнни те кирлĕ. Куш шухăша эпĕ хамăн «Сăнарлă сăмах шыравĕ» (1996) монографире калама тытăнса пăхнăччĕ. Каярахпа Хусанта, Ижевскра, Глазовра, Мускавра иртнĕ конференцисенче тарăнлатма пикеннĕччĕ. Эпĕ ĕненнĕ тăрăх, истори хăрталанă чух теори принцĕпĕсенчен хăпма пулмĕ. Ĕнтĕ паянхи кун фольклора кăна литература никĕсĕ пек курма çук пулĕ. Хв. Уяр, М.Илпек романĕсенче ав йăла-йĕрке протоколĕ тĕпе килет, И.Тăхти калавĕ-очеркĕнче плеоназм (нумай сăмахлăн пек калаçни), калавçă айвана персе сăмахлани мал ĕмĕтленет, Исаев Мĕтри, И.Тукташ, А.Л.Агаков, Хв. Уяр пултарулăхĕсенче очерк пысăк вырăн йышăнать. Этонодидактикăллă хайлавсен (притчăсен) те хăй пĕлтерĕшĕ пурах... Каламасăрах паллă – пĕтĕм тĕнчери, регионти халăхсен культурăпа философи ăнĕпе пĕр пекки пурах.

Ку пĕчĕк кĕнекене эпĕ чăваш халăх писателĕн, Л.Агаковăн харкам стильне сăнаса пăхас, ун теориллĕ истори палăрăмĕсене тупас тĕллевпе çыртăм. Пултарулăх çулĕн эстетика, биографилĕх туртăмĕсем епле хыйăннин, шырав çулĕн тапхăрĕсене палăртма тăрăшрăм. Мĕнле пулса тухрĕ вăл? Кунта ĕнтĕ вулакан татса калĕ, тиркештерĕ, сĕнӳсем парĕ. Çырăннă кашни пĕр хайлава сăнаса, тишкерсе хак парас тĕллевĕм çук манăн, эп шутланă тăрăх, кунашкал тĕпчевре тĕпрех хайлавсен

кăтартуллă енсĕм çинче чарăнса тăни пахарах. Пĕрлех, прозаик биографийĕн авăкĕсем ун тĕнчекурăмне мĕнле, мĕн енчен сĕтеклентернине ăнкарса илесси те.

Илĕпĕр акă Агаков шыравĕсенчи герой концепцине. Обществон уйрăм тапхăрне мала хунăран, истори аталанăвĕн конкретлă вăхăтне тĕпе илнĕрен, çыравçă хăй сăнланă çынсем хушшинче малтанах хатĕр характерсене ытларах кăмăллать. Романтикăллă тĕнчекурăм екки-хапи ăна таса, çутă чунлă персонажсем еннелле тайăлтарать. Ку геройсем яланах максималист чунлă, хăйсем кăмăлланă идейăсене вĕсем пĕтĕм чунпа парăннă, ăша кĕрсе вырнаçнă идеалсене хӳтĕлессишĕн ку çынсем пурнăçне те шеллемеççĕ. Вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ «вĕçне çити» лирикăллă, хастарлăхпа тулли, çине тăрулăхпа вĕри («Пĕрре çуркуннери...» Тарас, «Хĕр юрринчи» çамрăк та хăюллă хĕр т.ыт.те). Пĕр ĕненнĕ япалана, пулăма, шухăша геройсен, хăть тепле пулсан та, вĕçнех çитермелле.

«Шанчăк» романри Сарьялов консерватори пĕтернĕ, сĕрме купăсçă пулма тĕв тунă. Хаяр çапăçура ун пӳрнисем татăлаççĕ, ĕнтĕ апла тек музыкант пулас ĕмĕт харама каять. Çакна ăша илнĕ салтак темиçе хут та вилме тăрать. Уншăн çурмалла йышăну, çурмалла утăм çук. Ăна пулăшма тăракан Сурская та çурмалла утăм мĕнне пĕлмест. Çак палăрăм героикăллă кашни сăнартах тапса тăрать писателĕн («Шанчăкри» Актай журналист, «Ылтăн вăчăрари» Ванюшкапа Санька т.ыт.те).

Кĕрешӳ хавалĕ, çутă идеалсем – вĕсен характерĕсенче тĕпкĕче ларнă, писатель вĕсене ятнех çутатса тасатнă. Ку ĕнтĕ, тĕнче, Европа литератури енчен пăхсан, XIX ĕмĕр тавралли романсене аса илтерекен пулăм. Ку тапхăрти романсенче ялан максималистсем, ахаль çынсенчен расна геройсем сăнланнă. Л.Агаковăн тăнчекурăмĕ çак енчен питĕ ăнланмалла: культура шăпи, общество пурнăçĕ 20-30, 40-70 çç. тĕлнелле çав тери кăткăсланса, йывăрланса çитнĕ, обществона героикăллă идеал кирлĕ пулса тăнă.

Çакăнпа сăлтавланать те Агаков кунашкал хивре те вĕри чĕреллĕ геройсем патне, XIX ĕмĕрти роман поэтики патне туртăнни.

Тĕксĕм те аврăçнă чунлă сăнарсем те ахаль çынсем мар, вĕсем те «вĕçне çити» хаяр, вĕчĕх чунлă, хапсăнчăк ĕмĕтлĕ. Ав мĕншĕн прозаик хăш чух вĕсене калаçакан, сатира сулнăкне кайнă ятсем тупса парать: Махорка, Пăшатан («Пĕрре çуркунне...»), Шатри, Чалăшши («Юманлăхра çапла пулнă) т.ыт.те. Ку персонажсен те çурмалла кăмăл-туйăм çук. Паллă: пурнăçăн социаллă енĕсене сăнарлăн тишкерет çапла Леонид Агаков, историн пăтăрмахлă е тӳрĕ çулне-йĕрне тĕпчет.

## Çыравçă кун-çулĕнчен

Леонид Агаков. Ку ят чăваш вулаканĕшĕн питĕ çывăх. Ĕмĕр тăршшĕпе лăш курмасăр çырнă ăста вăл; тĕрлĕ жанрсене (роман, повесть, калав, новелла, очерк, тĕрленчĕк, статья) алла илнĕ автор. Пултарулăх туртăмĕсем те нумай сăпатлă ун: вăл лирик-романтик та, шаймăклă (приключениллĕ) хайлавсен маçтăрĕ те, вăлах – сатирик, публицист, тĕпчевсен авторĕ. Ун калавĕ-повеçĕнче тепре чух фантастика варкăшĕ сисĕнет, камитлĕ-иронилле хавха (пафос) тапса тăрать.

Агаков литература анине 14–16 çултах ура ярса пуснă ĕçчен. Учитель ачи пулнăран, Етĕрнери педтехникумра вĕрентекенсем сĕннипе Жюль Верн, Майн Рид, Фенимор Купер, Конан Дойль кĕнекисене вуласа пултарулăх хакăлĕ хывнă вăл. Прозаик мĕнле кĕнеке вулани-туни, паллах, ăнсăртран мар, çав роман-повеçре писатель мĕншĕн тата мĕнле хайлавсем ăсталама тытăнни куç кĕрет. Акă вăя кĕрсе çитнĕ, çырас ĕçе ал хăнăхтарнă ăстан асаилĕвĕнчи пĕр сыпăк: «Питĕ нумай вулаттăм эпĕ, вырăс классикĕсемсĕр пуçне ытти халăхсен кĕнекисене «çăтаттăм». Пĕр хушă Шерлок Холмс тата ытти сыщиксем çинчен çырнă детективсем пуçа çавăрсах яратчĕç. Тен, çавăнпа та-и эпĕ приключениллĕ жанра паян кун та юрататăп, хам та, вăй çитнĕ таран, çав жанрпа ĕçлеме тăрăшатăп».

Вырăс çыравçисен кĕнекисемпе паллашни те харама кайман – М.Горькирен социаллă пурнăçа сăнама, «класлă кĕрешӳ» çивĕчлĕхне курма хăнăхать каччă. Чăн та, хăш чух производство технологине, индустри хывакансен хастарлăхне курни ăна сиен те кӳрет: колхозлă пулас ял нуши-хури, кулакпа чухăн кĕрешни час-час идеологи ăшне путать. И.С.Тургенев ăна лирика еннелле туртать; А.П.Чехов сатирăпа юмор пулăхĕпе илĕртет, ироние лирикăпа пĕтĕçтернипе тĕлĕнтерет т.ыт.те.

Чехова пулах, вăл тĕрлĕ героя хупăрласа тăракан ситуацисене тĕплĕн тĕсеме хăнăхать, герой йĕри-тавралăхне (вырăсла: среда) аван сăнарлать. Майĕпен писателĕн сатирăллă сăнарĕсем социаллă тип картне вырнаçаççĕ. Совет тапхăрĕнчи тĕрлĕ çыравçăсенчен те нумая вĕренет яш Леонид – В.Катаева куçарнă чух асра, ăшра юлнă шухăш-кăмăл ăна ача-пăча прози хайлама пулăшать, вĕсен детективлă ăшĕ-чиккине илĕртет. Б.Горбатов прозине куçарни вăрçăри паттăрлăха тимлĕрех сăнама хистет. Прозаик, çапла, героикăллă, романтикăллă персонажсем калăплас çул çине тăрать. Çырас ăсталăха Агаков, эппин, вырăс литературипе паллашса та туптать.

Чăн-чăн литература çулĕ ун 1928 çултан пуçланнă, анчах вак-тĕвек заметкăсем 1924 çултах (ун чух çыравçă ача çеç пулнă-ха, 14 çулта кăна) кун кура пуçлаççĕ. «Канаш», «Çамрăк хресчен», «Пирĕн ял» пек хаçатсем, «Капкăн» журнал хапăлласа йышăнаççĕ вăл çырнитунине. Вăл çех те мар, ачаранах сăмах техĕмне туйнă çамрăка Степан Лашман, Аркадий Золотов, Иван Мучи тӳрех асăрхаççĕ, 1928 çулта çамрăка Шупашкара чĕнсе илеççĕ. Унтанпа вара перопа ручкăна алран ямасть çыравçă, хăй 60 çул тултарнă (1970) тĕле 49 кĕнеке кăларать, «Пĕрре, çуркунне...», «Тăван юншăн», «Юманлăхра çапла пулнă» пек повеçсен, «Чи хакли», «Шанчăк» романсен, нумай новелла хайлавçийĕ пулса тăрать.

Тĕлĕнмелли çук, кĕнекисем унăн çулленех çапăнса тăраççĕ. Вăрçăпа вăрçă хыç-çăнхи вăхăтах тĕслĕхе илсе пăхар-ха: «Пĕрре, çуркунне...» (1940), «Манăн туссем» (1941), «Фронтри ачасем» (1942), «Тăван юншăн» (1943), «Çапăçу хирĕнче» (1944), «Пĕр хулара» (1946), «Ылтăн вăчăра» (1947)... Вĕçĕмех çапла. Ку кăна çителĕксĕр уншăн, ал пушатми ытти халăх çыравçисен произведенийĕсене куçарать вăл. Писатель чăвашла янраттарнă ятсем хушшинче Юлиус Фучик (чех), Ярослав Гашек (чех), Стефан Гейм (нимĕç),

К.Живульская (полячка), Хар Сен (кореец); вырăс çыравçисем: А.Островский, А.Герцен, Л.Толстой, А.Чехов, М.Горький, А.Фадеев, В.Катаев, Б.Горбатов тата ыттисем.

Çакнашкал шыравра ун ăсталăх çулĕ такăрланать: пĕчĕк тĕрленчĕксенче, очерксенче тупăннă сăнарлăх-сăнар, сюжетпа композиции, стиль пулăхĕ сатирăллă хайлавсенче йăл илет. Очерксем ăна калав пулас техĕмпе илентереççĕ. Кĕçĕн жанртан пуçланнă ăсталăх йĕрĕ çыравça вăтам жанрсем, лирикăлла туртăмсем, героикăллă приключени патне илсе тухать. Ку вара питĕ кăсăк пулăм: роман-повесть хăйевĕрлĕне, эппин, прозаик кĕçĕн жанрсен поэтикине алла илсе ăнланса пырать. Ку тĕлĕшпе вăл В.Пайменпа, Хв.Уярпа, М.Илпекпе пĕр ретре темелле пулĕ. Асăннă писательсем те хăйсен романĕсене кĕçĕн е вăтам жанрсен стиль пуянлăхне алла илнипе калăплама ăсталăх çавăрнă.

Аслисем ырă сунса хавхалантарнăран пуç çĕклеми тенешкел çыра пуçлать Агаков. 1931 çулта кăна унăн пĕр харăс виçĕ кĕнеке тухать («Вĕтлĕхри отряд», калав; «Юлашки юмах» калавсен пуххи; «Инкесем», калавсен пуххи). Литература ĕçĕн чăн пуçламăшĕ вырăнне 1928-мĕш çулта пичетленнĕ «Тумхахлă çул» ятлă пысăк калава палăртмалла пуль, ун айне пуçлакан автор хăй хушамачĕпе мар, Леон Линч псевдонимпа алă пуснă. Ку яхăналла ĕнтĕ унăн тĕпрех шырав туртăмĕсем те чăмăртана пуçлаççĕ, заметкăсем çырас кăмăл унра очерксем хайлас енне сулăнать. «Капкăн» журналта Иван Мучипе тытнă тачă çыхăну ун сатирăллă, юморлă пултарулăхĕшĕн юравлă пулса тăрать.

Сых ятне тенешкел каласа хăвармалли те пур. Колхозсем йĕркелесси, индустрие аталантарасси, производство саккунĕсем çинчен пуçтарнă сăмахра та Агаков ахаль пурнăçран, чăмăрлах илнĕ конфликтсемшĕн хыпăнмасть. Çавăнпа геройсен шăпи те, сюжет таппи те, композици тытăмĕ те ун, тĕпрен илсен, сăнарланă лару-тăруран, ўкерсе панă ĕç-пуçран

шăранса тухаççĕ. Ку вара Чеховпа Горький, Тургеневпа Катаев опытне ăша ытла та тарăннăн, эмоциллĕ илнинчен килнĕ-тĕр.

Пĕрлех, прозаик ачасем валли çырмаллине асра тытать («Фронтри ачасем», 1932 çулта хастар хаçатçă Чулхулара (Нижний Новгородра) пулса автозавод тăвакансен ĕçĕ-хĕлĕнчен тĕлĕнет. Кĕçех «Хăват» драма çуралать, ăна Чăваш академи театрĕ сцена çинче кăтартать. Курăсăр, творчество диапазонĕ анлăланчĕ сăмах ăстин. Вăл ача-пăча литературин пултаруçи, очеркист-журналист. Вăлах – прозаик, сатирик, драматург.

Драматург пулма очерк çырма пĕлни çеç çителĕксĕр, куна Леонид Яковлевич аванах ăнланать: çавăнпа драма хайланă çулах (1932) Мускава çул тытать, Луначарский ячĕллĕ театр институтне (ГИТИСа) кĕрет. Куна пĕлтерĕшсĕр утăм темĕпĕр – малтан Чехов, Купер, Толстой пек çыравçăсен хайлавĕсене ытарайман çамрăк халĕ (Мускавра) А. Афиногенов, Н. Погодин, В.Вишневский драматургсем каланине итлет. Ку та – литературăн пысăк шкулĕ. В.Катаев, Л.Славин пек прозаиксемпе курнăçни те унра тарăн йĕр хăварать. Мĕне тĕпе хурать тейĕр пулас ăста çак лекцисенче, тĕлпулусенче? Пултарулăх ĕçĕн саккунĕсене, сăмахпа ĕçлес мехеле. Вĕсем çырнă повесть-пьесăна вулать, вĕсен ăсталăх саккунĕсене çивĕч туйăмлăн, чĕррĕн ăнланать, ăша илет.

1935 çулта ГИТИСăн театр пĕлĕвĕн факультетне пĕтерет Агаков, Шупашкара таврăнать. Ăна тĕп хулари театр техникумне вĕрентме илеççĕ. Театр, драма пĕлĕвĕ енчен ал çавăрнă хастар Леонид çине-çинех тĕпчевлĕ тĕрлĕ статья та çырать, нумай куçарать. Ку та вăл – çырас ăсталăха хăй умĕн пурăннă, вăл ĕçленĕ тапхăрта çыракан классиксенчен вĕреннин кăтартмăшĕ. Паллах, пултарулăха чăваш сăмахĕн ăсти кĕнеке вуласа çеç туптаман. «Канаш» хаçатра тăрăшнă чухах (Мускава каяс умĕн) вăл ялсем тăрăх нумай çӳрет, чĕрĕ пурнăçпа

паллашать, куçкурăмне, туйăм хăватне çивĕчлетет. Куллен-кунри пурнăçра очерка тивĕç çынсене, тĕрленчĕке ӳкес лару-тăрăва, калав-новеллăра сăнланас типсене (социаллăх паллиллĕ геройсене) тӳрех туйсасиссе илме алă çавăрать. Апла тăк çамрăк прозаикшăн публицистика туртăмĕсем сывлăш пек кирлĕ пулнă, вĕсене сăнаса, ăша хывса пынипе, Агаков пурнăçăн социаллă енĕсене тарăнрах ăнкара пуçлать, аналитикăллă проза чĕмне (содержанине) тĕпчесе ӳсет.

1938 çулхине яш çамрăка çара илеççĕ. Хĕсметре (службăра) вăл Ленинградра (Петербургра) тăрать. Ĕнтĕ кĕнеке-хаçат çеç мар, хăй курни-илтни те ытларах хумхантара пуçлать ăна. Мĕн кĕçĕнрен сăмах техĕмĕтутине туйса çитĕннĕскер, чун-чĕре ĕçне кунта та манаймасть вăл – сăнать, çырать, шырать. Ку яхăнчченхи вăхăт, çавна кура, Агаков пултарулăхĕн курăмлă пĕр кӳлĕмĕ ĕнтĕ. Çак яхăнра вăл сăмах анинче хăйĕн ăсталăхне самаях туптанă. Ун стиль туртăмĕсем (лирика, сатира, приключени), жанрĕсем (калав, калавсен ярăмĕсем, повесть, драма) йĕркеленеççĕ, литература несĕлĕсен (вырăсла: литературный род) паллисем (драматурги, публицистика, эпос, лирика) хывăнаççĕ. Ал хăнăхмалла çырнă, опыт пуçтарма хăйне тĕрĕслесе пăхнă тапхăр вĕçленет. 1939 çултан пуçласа писатель ĕнтĕ вăйпитти прозаик, сатирик. Драма çырас ĕмĕт халĕ ăна илĕртме те пăрахать. Ку уншăн çитменлĕх мар, ӳсĕм те. Драма-пьеса вуласа çыравçă конфликт çивĕчлĕхĕ мĕнре, мĕнле палăрмаллине тавçăрать. Сăнланас кашни геройăн чунĕ-чĕри хăйне майлă пулмаллине ăнкарать. Çак пĕлӳ уншăн проза çырнă чух та питĕ ал майлă.

Пĕрремĕш утăмсенченех çамрăк литератор пурнăçа çапла тарăннăн сăнанă. Çавăнпа ытти ăстасеннипе пăтрашми, хăйне кăна тивĕç туртăм хывăна пуçлать унăн. Ачасем валли çырас ĕмĕт ăна сюжета илĕртӳллĕ, кăсăк хывмалли çинчен астутарсах тăнă. Чăн та, сюжет тĕллевĕсем кун пек чух васкавлăрах пурнăçланаççĕ, ача

çулĕнчи сăнарсем унăн героикăллă, вĕсенче идеализаци тӳпи ӳсет. Анчах та ку ĕнтĕ вăл детективпа приключенирен те килнĕ-тĕр. Сатирăпа юмор анине килĕштере пуçлани те ун умне пысăк тĕллев лартать. Кулăш технологине алла илме шӳт калаканăн чĕлхи-пуплевне лайăх пĕлмелле, тĕрлĕрен шӳтле эпизодсен, анекдотсен содержанине тишкермелле, фельетонра палăракан илемлĕх мелĕсене сăнамалла т.ыт.те. Çавăнпах Агаков ӳстерсе калăпланă сăнарсемшĕн хыпăнма пуçлать, гротеск патне туртăнать. Очерксем енне туртăнни пурнăçа куллен сăнаса пыма, пултарулăх ĕçĕнче кирлĕ материала асра тытса юлма хăнăхтарать. Ахальтен мар вăрçă вăхăтĕнче те çар корреспонденчĕ пулас тивĕçе пысăка хурать салтак-çыравçă. Фронтран таврăнсан та çав кăмăла манăçа хăвармасть.

Прозаик пултарулăхĕн пĕрремĕш тапхăрĕ 1939 çулпа вĕçленет темелле, çак çулхине вăл «Пĕрре, çуркунне...» повеçе çырса пĕтернĕ. Кунта, çинех тăрсан, сатирăллă лару-тăру та, журналистла чăнлав та (документлă пек туса çырни), приключенипе пăтăрмах та, çепĕç лирика та тупма май пур. Çак мĕнпур ене писатель пĕр пысăк хайлавра чăмăртаса тĕртĕмлет. Çапла туса социаллă пурнăçа анлăн, нумай енлĕн сăнлать. Кунпа пĕрлех повеçе (теми-проблеми енчен пăхсан) пĕрремĕшпе иккĕмĕш тапхăрăн чикки теме те май килет. Ан тив, Финляндипе вăрçнă тапхăрта çырăннă пулин те, ку хайлаври событисем ял пурнăçĕпе çыхăннă.

Хушса каламалли те пур: унчченхи калав, очерк, пьеса-тĕрленчĕк Агаков куллен-кунăн уйрăм йĕрĕсене сăнланипе паллă. «Пĕрре, çуркуннере...» вара писатель социаллăх енчен, истори аталанăвĕ тĕлĕшĕнчен панорамăллă событисене сăнарлать. Хайлав геройĕсем те йышлă: кулакла вăр-хурахсем, çĕнĕ пурнăç активисчĕсем, чухăн хресченсем, халăх т.ыт.те. Писатель эпика енне сулăнни, эппин, тӳрех куçа ӳкет: пысăках мар повеçрех 20-мĕш çулсен сывлăшĕ тĕрлĕ енлĕн курăнса каять, чăваш ялĕн социаллă, хирĕç тăруллă,

психологиллĕ ăшĕ-чикки уçăлать, писателĕ хăй калăплă проза саккунĕсене алла илнĕ çыравçă пек тухса тăрать.

Сатирăллă эпизодсем, геройсем, ĕç-пуç сăнланă пурнăçа гротесклăн ӳкерме хистеççĕ. Чăнах та, Махорка, Лява Уртемĕ – сатирăллă персонажсем çеç мар, вĕсен тыткаларăшĕнче пăтăрмахлăх та нумай. Сюжета çав геройсем приключени, шаймăк енне сулăнтараççĕ. Вĕсене хирĕçле йĕр Тараспа ун тусĕсем хăйсене мĕнле тыткаланинче палăрать. Кун сюжетлă таппи – лирикăллă, романтикăллă, геройсем те, лару-тăру та хушăран идеализациленĕ сăпатлă. Икĕ ен апла питрен пит контрастлăн çапăнать. Çак антитезăлăх – Агаков эстетикин тĕп палли, вăл каярахпа калав-повеçре те, романсенче те тарăнланса, туллиленсе пырать. Пурĕ пĕрле ку ен прозаик шаймăклăха та романтикăлла антитезăна та кăмăлланине палăртать. Тата тепĕр ен – 1939 çултах çĕн техĕмлĕ (вăрçă сăнарне калăплакан) темиçе калав çырать Агаков («Приказ», «Пулеметчик юрлать», «Разведчик Джунгали»). Çак самантран пуçласа вăрçă сăнарне мала хурасси вăй илет çыравçăн. Кунта та çав антитезăлăх тĕпе килет.

Ку яхăнчен калани çакна ĕнентерет: писатель социаллă тĕрлĕ лару-тăрупа питĕ тачă çыхăннă, çав пурнăçа аналитикăллă сăнама хăнăхса пынă. Çавăнпа вăл публицистика енне туртăннă, писатель ĕçне журналист ĕçĕ-хĕлĕпе пĕрлĕхлетнĕ. Тĕрлĕ пичет органĕсенче ĕçлени ун проза ăсталăхне туптать, каярах ун прозин эстетика тытăмне шăнăрла пуçлать.

Иккĕмĕш тапхăрăн ăшĕ-чикки те хăйне евĕрлĕ. Ытларах чухне ĕнтĕ новеллăсем хайлать çыравçă-фронтовик. Хăй ирĕкĕпе фронта кайнăскер, кунта та пичет ĕçне пăрахмасть. Пăрахма майĕ те çук иккен, вăл сăмах ăсти пулнине сиснипе пуçлăхсем Агакова дивизи хаçачĕн редакцине куçараççĕ. Ку яхăнта мĕншĕн ытларах кĕçĕн жанр шăранса тухнине ăнланма çăмăл – вăрçă вăхăтĕнче калăплă жанрпа ятарлă ларма вăхăт пулман. «Л.Агаков та, – тет Н.Дедушкин критик, – çавăн пекех,

çапăçу хирĕнчех, çĕр пӳртсемпе блиндажсенче е пĕр-пĕр çĕтĕк-çатăк çуртра, ăçта май килнĕ çавăнта çырать».

1941–1945 çулсенче нимрен ытла героикăллă хайлавсем чăмăртанаççĕ ун, кĕçĕн жанрсенче вăл лирикăпа романтикăллă пафоса кăмălла пуçлать. Ачасен вăрçă вăхăтĕнчи вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ те палăра пуçлать пĕчĕк калавсенче. Хайлавĕсем – вĕçренех, çулталăкне темиçешер: 1942ç. – «Юлташ пурнăçĕ»; 1943ç. – «Салтак чунĕ», «Лăпкă çын», «Старик», «Хĕр юрри»; 1943–1945çç. – «Вилĕмрен те вăйлăрах»; 1943ç. – «Тăван юншăн» («Партизан Мурат»), «Фронтри ачасем» т.ыт.те.

Каллех хушса каламалли пур. Вăрçă калавĕ-повеçĕнче антитеза мелĕ психологиллĕ ĕнентерӳлĕхпе пĕтĕçет. «Хĕр юрринче», сăмахран, идеаллă паттăр хĕрĕн романтикăллă хăйхаллĕхĕ нимĕç коменданчĕн пурнăçĕпе хирĕç тăруллă. Ку этем – айванрах ăслă темелле, анчах хаяр та вăл, пушанка ĕмĕтпе йăпанса пурнасси те (çĕр хуçи пуласса кĕтни) пур ун. «Ылтăн вăчăрара», ав, Ванюшкапа Санька (ачасем) Генрих Шварц офицерпа хире-хирĕçле.

Ку тапхăрти хайлавсенче час-часах калавçă сăнарĕ мала тухать. Калуçă ĕç-пуçа аякран курса тенĕ пек сăнлать. Калавçă вара яланах – пĕр-пĕр герой; вăл хăй тӳсни-курни çинчен чун уççиллĕн пĕлтерет. Эпĕ тесе пĕрремĕш сăпатран калаçакан паттăр салтакăн монологĕ психологи енчен ĕненмеллерех. Çавăнпа, ялан тенешкел, калуçă калавçă-героя сăмах памалли условисем, экспозици хатĕрлет.

Çав çулсенче калавçă-герой сăнарĕ мала тухнин сăлтавĕсенчен пĕри – Л.Агаков ялан тĕрлĕ салтак-командир, оккупацире пулнă çынсем каласа панине итлени, çыра-çыра пыни. Çав «калавсем» (каласа пани) илемлĕ хайлавра тĕртĕмленни. Акă 1943 çулта çыра-çыра пынă темиçе тĕслĕх.

«...Ĕненмелле мар хăрушă историсем каласа кăтартаççĕ. <...> Паян пĕр хĕрарăмпа калаçрăм. <...> Нимĕçсем вĕсен ялне тăрук хупăрласа илсе, пурне те

хире хăваласа кăЛарса, 197 çынна персе пăрахнă. Ку хĕрарăмăн 7 ачине, упăшкине вĕлернĕ». «Эпĕ «Ылтăн вăчăра» çыра пуçларăм. Малтан вăл повеçе «Персе пăрахнă ача» тесе ят панăччĕ».

«...Терюха ялĕ, Терехов р-нĕ, Гомель облаçĕ. Ёнер нихçан курманнине куртăм... Ку ялта нимĕçсем 38 ял çыннине пухса пĕр пӳрте хупнă та чӳрече витĕр шалалла граната ывăтнă, пӳртне çунтарма тытăннă. <...> Хам куçпа куртăм çунса кăмрăкланнă çынсен кĕлеткисене».

«...Эпир çав хĕрарăма тупса унпа калаçрăмăр. Питĕ хăрушă пулчĕ унăн калавĕ. Пĕр эрне ытла шухăшласа çӳрерĕм çав кун курни-илтни çинчен. Çунса кайнă çынсен кĕлеткисем, кăкрисене касса янă çамрăк хĕрарăм, хырăмне штыкпа чиксе шăтарнă виç-тăват çулхи хĕр ача вилли куç умĕнчен кая пĕлмерĕç».

«...Çакна çеç калама пултаратăп, – аса илет каярах çыравçă, – «Вĕри чĕре», «Старик № 33», «Юрă пурпĕр янăранă» тата ыттисен те хăйсен «биографийĕ» пур». Калавçă-герой сăнарĕн, эппин, прототиплă никĕсĕ питĕ уçăмлă, паллă.

Вăл писатель хăй курни-илтнине ăша ытла та ыратуллăн, чунлăн вырнаçтарнипе çураçуллă. Документлă чăнлав кунашкал прозăра пачах çĕнĕлле содержани тупать, сăнарлă илемлĕх картне вырнаçать. Пĕрремĕш сăпатран хывнă калав-монологсен илемлĕх тытăмĕ те хăй халлĕ – каласа паракан çын иртнине аса илет, ăна тепĕр хут йĕрлет. Çавăнпа эпилог пролог пулса тăрать, чун уççиллĕ хайлав пулса хывăнать. Кунашкал поэтика прозаика очерк тытăмĕнчен хăтăлма та пулăшать, хăй биографине çĕнĕлле курма-ăслама хăнăхтарать.

Чăнах та, «Старик № 33» калавра (калăпăшĕпе вăл повесть патнеллех капашать) пĕр дивизие канма илсе тухнине кăтартнă. Йăлт, тĕппи çунтарса янă ялсем çуммипе иртеççĕ фронтовиксем, çĕр пӳртсенче сывлăш çавăрса яракан вата-вĕтте кураççĕ. Ку, паллах, герой калас сăмахăн çивĕчлĕхне ӳстермелли мел. Пĕр çуртра

ватă старик-учитель ачасене хăй тĕллĕнех вырăс чĕлхи вĕрентсе çӳрени сăмах пуçарса ямалли экспозицишĕн паха. Çакăн хыççăн тин Яков Иванович старик калавĕ сыпăнса каять, вăл тылри хăрушă ĕç-пуç çинчен каласа пани кашни вулакан чĕрине тытса илет. Ытти чылай новелла та тытăмĕпе çапларах çырăннă, пурте вĕсем вăрçă вăхăчĕ обществăна чун уççиллĕ сăмах кӳнине кăтартаççĕ.

Литературăра ку яхăнта каласа паракан çын сăнарĕ, ун монологĕн ĕнентерӳлĕхĕ, лирикăлăхĕпе романтикăлăхĕ (А.Артемьев, А.Медведев, В.Игнатьев, М.Кипек, ыттисен прозинче) мала тухать. Калавçă, хайхи, çавна пула сатирăпа юморта та хăй валли пысăкрах вырăн ыйта пуçлать. Çавна пула шӳтпе камит те лирика та техĕмлĕн хайланаççĕ. «Кулăшла япаласене вулама питĕ юрататчĕç пирĕн паттăр салтаксем, – аса илет каярах çыравçă. – Траншейăсене, блиндажсене фронт, арми е дивизи хаçачĕсене илсе пырсан чăн малтан Информбюро сводкине пăхса тухатчĕç, унтан тӳрех фельетон шырама тытăнатчĕç».

Йĕплĕ калав çырма сăмах-юмаха вăлтса, юплентерсе калама пĕлмелле. Агаков та ку ĕçрен пăрăнасшăн мар, калас тенине ӳстеререх хайласа тĕрлĕ шӳт ăсталать вăл («Голова в штанах», «Право на поцелуй», «Пĕр çамка историйĕ» т.ыт. те). Анчах хăш чух юморлă хайлавра та лирикăран писес темест. Мĕне пĕлтерет çакă? Леонид Агаков хăй вăхăтĕнчи стиль, поэтика уйрăмлăхĕсене çивĕч туйса тăнипе пуль.

Кунпа пĕрлех, хăй кун-çулĕн, чун биографийĕн авкаланчăкĕсене вăл турă панă пултарулăхпа тачă çыхăнтарнине. Çыравçă çулĕ апла вăл пурăннă саманапа çураçуллă. Çитменнине, писатель ӳсĕмне шăнăрлакан лару-тăрăва кăтартакан паллă та вăл.

Паллă тĕпчевçĕ, Л.Гинзбург шухăшĕ ак: психологиллĕ прозăра та публицистика техĕмĕ пур. Ку ăнланмалла: Агаков хăй те фронт хаçачĕсен сотрудникĕ, журналист, çырса пынисене вăл калава хывнинче те

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики
4-42884

ӑнлавлӑх прототипа выртни çук мар. Хӑй куçӑн курнитунине каласа парать-çке, хӑй биографийӗн авкаланчӑкӗсене тӗсет. Кӗтмен çӗртен вӑрçӑра кӑткӑс лару-тӑрӑва лекни кашни çыннах çивӗч туйӑмлӑх патне çитерет. Эппин çакӑ вӑл писатель пултарулӑхӗн тата тепӗр енӗ.

Виççӗмӗш тапхӑрта проза пултаруçи калӑплӑ жанрсем ытларах хывасшӑн. Ку яхӑнта «Ылтӑн вӑчӑра», «Пӗр хулара», «Салтак ачисем», «Кӑсăя» повеçсем шӑрçалать вӑл, «Чи хакли», «Шанчӑк» романсем кӑларать. Повеçсенче тылра е партизансемпе пӗрлех оккупацире е çапӑçу хирӗнче паттӑрлӑх кӑтартнӑ ачасене ӳкернӗ. Приключенилле, кӑштах романтикӑллӑ хайлавсем çапла Агакова ача-пӑча литературине еннелле тайӑлтараççӗ.

Сатирӑпа юмор та куçран çухалмасть. Вӑрçӑ анинче асӑрханисене пӗр çӗре пуçтарса, пӗр тӗле кӳрсе писатель-фронтовик «Çӑпала Иванӗ каласа панисем» ятлӑ шӳтлӗ калавсен ярӑмӗ хӑрталать (1945–1954). Ку хайлавсем шӳтлӗ кӑна мар, çепӗç лирикӑллӑ та. Акӑ ӑçта юрӑхлӑ пулчӗ эппин Агаковшӑн А.П.Чехов опычӗ; вӑл та юморпа лирика пӗрлӗхне кӑмӑлланӑ-çке! Ерипен шӳт хаяр сатирӑна та куçать. Çыравçӑ тӗрлӗ сӑтӑрçӑсене, услап-кахалсене, пакӑлтисене питлесе вулакана çӑвар туллин култарать. Çине-çинех шӳт-камит, мыскарафельетон кӗнекисем туха-туха пыраççӗ: «Кулас килет» (1955), «Качака такисем» (1959), «Епле тӳсетӗн-ха кулмасӑр?» (1960), «Хаклӑ кӗрӳ» (1962), «Лайӑх эмел» (1967), «Сиенлӗ чап» (1969) т.ыт.те.

Çак ӑсталӑха çыравçӑ Иван Мучипе хутшӑннӑран, Гоголь çырнисене асрах усранӑран тата ытларах ӳстерсе пырать, приключенилле хайлавсенче вулакан ӑна Иван Мучи çав тери пысӑк витӗм кӳнине сисет. Кунашкал мехел çамрӑк прозаик пархатарсӑр (сивлек) геройсене сӑнланӑ чух аван курӑнать. Иван Мучи пекех вӑл та чыссӑр-пилсӗр çынсене гротескласа (шултралатнӑ, ытла та ӳстерсе янӑ, сатирӑллӑ сӑрсемпе) ӳкерет. Теплерен

вара сăнар карикатура еннех сулăнать. Иван Мучи евĕрлех, Агаков та шӳтлĕ лару-тăру хывнă чух пĕр йышши пулăмсене черетлесе ретрен-рет сыпса пырать. Çапла туса вăл геройри кулăшла енсем ӳссех пынине, шултралансах тăнине кăтартать. Куна пула, сюжет хăвăртлăхĕ ӳсет (повеçсенче уйрăмах), тĕрлĕ лару-тăру черетленĕвĕ конфликт çивĕчлĕхне ӳстерет. Ку вăл приключени палли, Агаков эстетикин тепĕр кăтартмăшĕ.

Писатель калавĕ-повеçне вуланăçем çакна лайăхрах чухласа пыратăн. Икĕ вăрçăра пулнă сăмахçă вăрçăри терт-хурана, паттăрсене, тискер фашистсене, вăрçăри ирсĕрлĕхе, ахаль салтаксене, командирсене, корреспондентсене, вĕсен шăпипе кун-çулне, тен, чăваш литературинче никамран та туллирех, никамран та нумай енлĕрех кăтартнă пулĕ.

1939 çулта писатель-салтак шурă финсемпе çапăçать, 1941–1945 çç. – нимĕç фашисчĕсемпе. Вĕри кăмăллă боец çапăçура шикленсе тăмасть, пĕр иккĕленмесĕр вута кĕрсе каять. 1943 çулхи «Чăваш коммуни» хаçатра çак хастарлăха çырса кăтартнă статья çапăнать: фронтран ку тĕрленчĕке И.Кирьянов майорпа А.Фаюстов лейтенант çырса янă. Тăвата кун паттăрсем нимĕçсен «çирĕпленсе ларнă» вырăнне штурмлаççĕ. Тăшмансем «çӳлтен бомба тăкнă, анчах боецсем, çине тăрса кĕрешнипе, метр хыççăн метр малалла куçнă» пирĕн салтаксем. «Нимĕçсен çав тĕреклетнĕ пунктне чи малтан пырса кĕрекенсем хушшинче кĕçĕн лейтенант Леонид Агаков командир ертсе пыракан подразделени те пулнă. Ку фактсен кăсăкĕ çав паттăрлăха кăтартнинче çеç мар. Фронт çулĕсемпе чăваш сăмахĕн ăсти ахаль салтак, командир, çар корреспонденчĕ пулса утса тухать, сăнать, калав-очерк çырать. Ку, паллах, – чĕрĕ пурнăç, боецсен кашни утăмĕнче ырă хавал, çĕнтерес кăмăл, патриотизм курнин палли.

Чăваш чунлă салтак тăван халăхĕ çинчен фронтра та манмасть, 1943 çулта награда илме тивĕç пулнă чăвашсен слетне ирттерет, фронтовиксен асаилĕвĕсене

хут çине ӳкерсе хăварать. Ку та ăнсăртран мар. Вăрçă вăхăтĕнче те, каярах та чăваш халăхĕ, ун пурнăçĕ ялан çыравçă асĕнче. Пирĕн ентешсем ытти халăх çыннисемпе туслă пулнине кăтартмасăр вăл пĕр хайлав та ăсталамасть тейĕн. Уйрăммăнах вăрçă хыççăнхи хайлавсенче ку ытла та час-час курăнать («Пĕр хулара», «Ылтăн вăчăра», «Куккук», «Шанчăк» т.ыт.те). Паллах, ку пĕр Агаковшăн кăна кăтартуллă теме çук, А.Артемьев та, сăмахран, инçет çулсем çинче тĕл пулнă чăвашсен паттăрла сăнарĕсене асăрхасах тăрать («Ан авăн, шĕшкĕ!», «Асран кайми» т.ыт.те). М.Илпек те кунашкал ыйтусемпех кăсăкланать («Тăвата кун» повесть, «Шипка çинче» очерк т.ыт.те).

«Советский патриот» хаçатра вăй хуракан очеркист публицистикăллă хайлавсенче те хăйĕн тĕп тĕллевне манăçа кăлармасть. «Мужественный комиссар» очеркра, калăпăр, Миташвили грузинăн ырă та ăшă кăмăлĕ лăпкать вулаканăн чунне. Вăл – комиссар, салтаксем ăна питĕ юратаççĕ, аманса сывалсан та унпа пĕрле çапăçма ĕмĕтленеççĕ. Кунтах – Хайруллин тутар, украинецсем, чăвашсем. «Отважный сын чувашского народа» очерк геройĕ – Гурий Захаров.

Тракторист кăна пулнăскер, хĕрӳ сăмах калама ăста вăл, салтаксене хавхалантарма пĕлекен агитатор. Мĕне кăтартать ку? Агаковшăн вăрçă витĕр утакансен паттăрлăхне кăтартасси кăна çителĕксĕр, çав паттăрлăх халăхсем хушшинчи çирĕп туслăхран сĕтек илсе тăни паха уншăн. Патриотизм тени пĕр-пĕр этем хăй халăхне кăна савни-юратнипе хывăнмасть, акă мĕне çирĕппĕн ĕненет чăвашсен пултаруллă çыравçи. Вăрçăри журналист ĕçĕ-хĕлĕ пирки прозаик хăй çапла калать: «...фронтри писатель аллинче çав иккĕмĕш хĕç-пăшал та питĕ вăйлă-мĕн, вăл та тăшмана снайпер винтовкинчен кая мар тĕл персе тивертнĕ».

Каланă шухăшăн тепĕр пайрăмĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Фронтра вилĕмрен хăрами çапăçнă паттăрсем, писатель шухăшĕпе, тылра та, вăрçă хыççăн та хастар. «Паттăр

комбат Сергей Урамов» ятлă очерк çырать Агаков, кайран çав материал «Туссем каллех тĕл пулаççĕ» калава чĕр вăй парать. Геройсем вăрçă вăхăтне аса илеççĕ, Сыт шывĕ хĕрринчи хаяр тытăçусене тепĕр хут йĕрлеççĕ. «Зениткăсем ӳхĕреççĕ, бомба тăкăнать, салтаксем аманаççĕ-вилеççĕ. Урамова та çĕрпе витсе хурать взрыв», икĕ эрне тăна кĕреймест салтак; пĕрех сывалать, мирлĕ ĕçре ырми тăрăшать. Вăл ĕнтĕ «яланах салтак», яланах малти ретре. Ун сăнарĕ хăй умĕнхи колхоз председателĕн тӳнтерлĕхне кăтартнипе тата уçăмлăрах пулса тăрать. Контраст мелĕ, писателĕн ытти чылай хайлавĕнчи пекех, калавра тухăçлă сăнарлăх мелĕ пек хывăнать. Ытти мел евĕрлех вăл хайлавăн илемлĕ структурине пур енлĕн шăнăрласа пырать.

«Отважный сын чувашского народа» очеркри Гурий Захаров персонаж та илемлĕ (художествăллă) хайлава куçать, «Пĕр витре шыв» калав геройĕ пулса ӳтленет. Кунта та вилĕмле тытăçусенче пĕрле пулнă тантăшсем (Руднев лейтенант, Захаров ефрейтор) çапăçу çулĕсемпе çирĕм икĕ çул иртсен аса илсе çӳреççĕ. Эппин, вăрçă вăхăчĕ çĕтсе çухалмасть, салтаксен асĕнчех пурăнать вăл. Туслăх сăнарне хайланă чух писатель, ытти, унчченхи новеллăсенчи пекех, пĕр-пĕр событие мала кăларать. Урамовшăн та, Захаровшăн та ăшра упраннă пĕр çапăçу хаклă, çавăнта тĕрĕсленнĕ те вĕсен туслăхĕ. «Пĕр витре шыв» та çапла тĕлĕшлĕ калав – Захаров чăваш Руднев вырăса вилĕмрен çăлать. Иккĕшĕ те паян таса та çутă кăмăллă ĕçченсем, хăйсене ĕçре те салтакри пекех тивĕçлĕ тытакансем. Акă ăçта вăл Агаков ăсталăхне чылай чух публицистика хавалĕ шăнăрласа тăнин сăлтавĕ!

Чун ĕçĕн хăйне евĕр ритмĕ Агаков хăй калавĕ-новеллине хăçан, ăçта çырнине кăтартса пынинченех аван курăнать. Кун кĕнеки тейĕн ку асăрхаттарусене – кашни хайлав хыçне вăл мĕн тапхăрта çырăннине кăтартнă: «1939, декабрь. Ленинград, госпиталь» («Разведчик Джунгали»); «1942, апрель. Гжатск патĕнче»

(«Юлташ пурнăçĕ»); «1943, июнь. Курск облаçĕ» («Салтак чунĕ»); «1943, ноябрь. Гомель облаçĕ» («Лăпкă çын»); «1943, июль. Курск облаçĕ» («Старик № 33», «Хĕр юрри») т.ыт.те. Кун пек кăтартмăшсене ăша хывсан, писатель пултарулăхĕн çулĕ мĕнле маршрутсемпе иртнине çăмăллăнах палăртса тухма пулать.

Ку тĕлĕшрен хайлавçă хăй биографийĕнче çырса пани кăтартуллă: «Манăн пирвайхи заметкăсемпе пĕчĕк очерк пеккисем Шупашкарта 1925–1926 çулсенче пичетленме пуçларĕç»; «1926 çулта хĕллехи каникула пырсан <...> эпир, хулара вĕренекен темиçе арçын ачапа хĕр ача, спектакль лартма шут тытрăмăр. <...> Вырăссен паллă писателĕ А.Неверов çырнă «Молодые побеги» ятлă пĕчĕк пьесăна тытрăм та чăвашла куçартăм. <...> Вăл «Сунтал» журналта пичетленсе тухрĕ»; «1927 çулта манăн «Капкăнра» пĕрремĕш фельетон тухрĕ». Акă тата ачалăхранах асра юлнă теветкеллĕ ĕç-пуç çинчен калани: «...Çавăн чухнехи фактсем пурте тенĕ пекех «Пĕрре, çуркунне...» повеçе кĕрсе вырнаçрĕç. <...> (Эп ăна 1938–1939 çулсенче, хам Хĕрлĕ Çарта службăра пулнă чух, чирленĕ пирки икĕ хут чылай хушă лазаретра выртнă вăхăтра çырнă.)»

Пулас çыравçă тăтăшах ĕçлет, хăйне пĕр кӳлĕмлĕхе те ирĕке ямасть. Çарта, хĕсметре тăнă тапхăрта, дежурствăри çыравçă «Сахар мучи – чемпион...» калав ăсталаса хурать, 1939 çултах, госпитальте сывалнă вăхăта сая ярас мар тесе, «Разведчик Джунгали» калав хăрталать, сывалса çитме киле ярсан «Пулеметчик юрлать» тата «Приказ» хайлавсем калăплать. Вăрçăн пĕрремĕш çулĕсенче вăтăрсенчи çамрăк командирсен шкулĕнче вĕренет, тин çеç тăшман ункинчен тухнă нумай çынпа паллашать. Вĕсем каласа пани кĕç «Партизан Мурат» (кайран вăл «Тăван юншăн» ятлă пулса тăрать) повеçе кĕрсе ӳтленет т.ыт.те.

Шухăшласа кăларни, чăн пурнăçра тĕл пулманни сахал-тăр Агаков хайлавĕсенче. Мĕн çырни-тунинче çыравçă пурнăç материалне аван пĕлни тĕпе килет, вăл

хӑй курнине, тӳсни-чӑтнине, тӗлӗнни-ӑсланине ӳкерсе пани курӑнать. Апла ун пултарулӑх ҫулне биографилӗх меслетне тӗпе лартса тишкерме те пулать. Пултарулӑх ҫулӗ писателӗн вӑл пурӑнса иртгернӗ авӑксенчен уйрӑлми.

Тарас («Пӗрре, ҫуркунне...») пурнӑҫра чӑнласах пулнӑ-ши? Вулакансем ҫапла ыйтни ҫине, сӑмахран, автор ҫапла хуравлать: ку сӑнара фотоаппаратпа ӳкерсе илмен, анчах «Тарас пек ҫынсем нумай пулнӑ. Пирӗн ялта та пурччӗ ҫавӑн пек ҫамрӑк ҫын – граждан вӑрҫинчен таврӑнсан тепӗр куннех халӑхшӑн ӗҫлеме тытӑннӑ ҫын». Ахӑртнех, ашшӗ ӗҫӗ-хӗлӗ те, ун шухӑш-кӑмӑлӗ те кӗнӗ-тӗр-ха Тарас сӑнарне. Ҫавӑнпа Тарас – пӗтӗмлетӳллӗ, пуҫтаруллӑ сӑнар. Каярах та сисӗнет ку: час-часах ун калавӗ корреспондент ҫырса пани евӗр те тӗрленет. Апла тӑк корреспондент пурнӑҫӗ писателе вӗҫӗмех чӗре хал парса тӑрать.

Таҫта та ҫитет ӑста: Финлянди фронтӗнче юн тӑкать, Ленинградри госпитальте сывалать, Гжатск тӑрӑхӗнче (халӗ Гагарин), Смоленск енче ҫапӑҫать, Белоруссие лекет, Днепр тӑрӑхне ҫӗнсе илнӗ ҫӗре хутшӑнать т.ыт.те. Ку ӑнсӑртран мар, ун калавӗ-повеҫӗнче ялан тенешкел *ҫул* сӑнарӗ курӑмлӑн калӑпланать.

«Пӗрре, ҫуркуннери...» сӑнарлӑ ӗҫ-пуҫ Тарас инҫет ҫултан таврӑнсан хӗрсе каять, «Хӗр юрринчи» лару-тӑру салтаксем Днепр хӗрне ҫитсен ӳкерӗнет, «Старик № 33» новеллӑри эпизодсен таппи фронтовиксене канма (Мускав патӗнчи хаяр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн) илсе тухсан ӗретлене пуҫлать т.ыт.те. Кунсӑр пуҫне писатель ҫар корреспонденчӗ пулнин пайти те пысӑк: материал пухма ун вӗҫрен вӗҫех чаҫрен чаҫе, полкран полка ҫитмелле пулнӑ, малти линире те час-час пулма тивнӗ.

Очерксем пирки те каласа хӑвармаллах. Ҫул ҫинчи тӗрленчӗксем, тӑхлан вучӗ айӗнче ҫырнисем, вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи пурнӑҫа сӑнани-тӗсени те пӗлтерӗшлӗ ҫыравҫӑн пултарулӑх ҫулӗшӗн. Кашни произведенирех темелле ӳнер (искусство), ӗҫченӗсем сӑнарланаҫҫӗ унӑн:

«Сĕрме купăсра» (1933) купăс калама ăста каччăна ӳкернĕ, «Шанчăкра» Иван Актай писатель-геройпа паллашатпăр, «Чи хаклинче» кăштах кулăшларах та айван, анчах таса та тӳрĕ кăмăллă Чатта сăвăç тухать куç умне, «Куккукра» (1948) фронтри салтаксене чăваш юррисемпе тĕлĕнтерекен хĕр пурнăçĕ кăсăклă т.ыт.те. Ахальтен мар кайран та Агаков театрпа ӳнер, музыка ĕçченĕсем пирки сахал мар пуç ватса шухăшлать: «Çĕр çитмĕл роль» (Б.Алексеев артист пирки, 1963), «Тава тивĕçлĕ артист» (Л.Семенов пирки, 1958), «Талантлă артист» (А.Ургалкин çинчен, 1960) т.ыт.те.

Кунран тĕлĕнмелли çук: 1940–1965 çулсенче вăйлă аталаннă чун уççилĕх, герой-калавçă монологĕ мала тухни, çынсем тасалăха, тӳрĕ кăмăллăха саварах пыни литература анине искусство ĕçченĕсен, наукăра пултаракан, ĕçре паттăрлăх кăтартакан, вăрçă тертне манман геройсен сăнарĕсене кӳрет. Ку тапхăр – романтикăлăх, лирикăлăх, çĕкленӳ, тасалăх, пысăк энтузиазм тапхăрĕ. Ун тымарĕсене тарăна яма Агаков нумай вăй хурать: тĕрлĕ пăтăрмахçăсемпе, авантюристсемпе кĕрешет (приключениллĕ хайлавсенче), пулчĕ-пулмарĕ йăх-яха питлет (сатирăра), чăн тасалăха ялавлăн çĕклет (новеллăсенче). Чăваш литературин çак яхăнти сăн-сăпачĕ хывăнас тĕлĕшрен Агаков тунă ĕçĕн пайти калама çук пысăк. Ĕненетпĕр: пултарулăх çулне прозаик хăй биографийĕпе, хăй кун-çулĕн авкаланчăкĕсемпе хывнă.

## Леонид Агаковăн илемлĕ тĕнчи

Критикăпа литература пĕлĕвĕнче Л.Агакова час-часах шаймăклă проза ăсти, приключениллĕ литературăна чăваш культуринче пуçарса яраканĕ тени тĕл пулать. Анчах пăтăрмахлă амаланакан сюжет хăйне евĕрлĕхĕ, ун малтанхи тĕввисем тĕрлĕ йĕрсемпе, Сп.Михайлов, Д.Кедров, Игн.Иванов, Н.В.Шупуççынни, М.Данилов-Чалтун, М.Кипек, В.Краснов-Асли çырнисенче те йăлкăшса илеççĕ. Хв. Уярăн хайлавĕсенче те тĕп вырăнсенчен пĕрне йышăнать вăл. Унашкал туртăма Хумма Çеменĕн хайлавĕсенче те сисетпĕр. Вăл та самана аврăç-пăрнăçне тĕрлĕ авантюрăсенчи сăнарлăх тĕшшине тупса сăнласшăн. Çапах та ĕнтĕ Агаков пултарулăхĕнче çак çулăм хăватлăнрах ялкăшать, туллинрех курăнать. Приключени, детектив çырас ĕçе те вăл аван пĕлет. Тĕпре ун ялан тенĕ пек событиллĕ троп (событийный троп) поэтики тăрать. Шаймăклă проза хăрталакан нумай-нумай автор пекех, Агаков та «пĕррехинче», «çапла пулса иртрĕ» текен принципа ум ярать. Хайлав ячĕсемпех куна аван систереççĕ: «Пĕрре çуркунне...», «Пĕр хулара», «Юманлăхра çапла пулнă» т.ыт.те.

Ăçтан, мĕнрен шăтса тухать çак сунăм-туртăм? Хв. Уяр пекех, Агаков та приключениллĕ хайлавсене нумай «çăтать» (хăй калашле). Куна эпир малтанхи йĕркесенчех асăрхарăмăр. Пĕрех, ăста çыравçăсен стиль хăйне евĕрлĕхне ытти чĕлхеллĕ культурăсен витĕмĕпе кăна хаклама çук. Ку ытла та айванла, кулăшла пулĕччĕ. Чăваш халăх сăмахлăхĕнчех вăйлă аталаннă пурнăç пăрнăç-карнăçне пăтăрмахлă ăн урлă курасси. Сăмах вĕççĕн каламалли текстсенче, фольклорта темиçе яла терроласа пусмăрлакан вăр-хурахсем, лаша вăррисем, чиксĕр вăйлă та чараксăр çынсем пирки каланă халапсен ытарлăхĕ тăтăшах тĕл пулать. Апла тăк Агаковăн илемлĕх тытăмĕ ытти чĕлхепе çырнă кĕнекесене «çăтнипе» кăна мар, чăваш халăх пултарулăхне аван пĕлнипе те паркаланать.

Тата мĕнле çăлкуçсем, тымарсем пур-ши? Кунта самана витĕмĕ те пурах пуль. Писатель хăй çапла евитлет: «Пĕчĕккĕ пулнă пулин те яла урядниксем пынине, куланай тӳлеменшĕн чухăнсене хĕненине, шкулта «закон божий» вĕрентнине астуса юлнă (учитель ачи пулнă май эпĕ парта хушшине питĕ çамрăкла ларнă –ултă çул тултаричченех). Ял çыннисене Пĕрремĕш тĕнче вăрçине мĕнле ăсатнине, хĕрарăмсем епле ӳксе макăрнине, салтака каяссинчен пăрăнса юлакансен чӳречисене «некрутсем» епле «чăнкăртаттарнине» те, фронтран уксах-чăлахсем мĕнле таврăннине те астăватăп».

Çыравçăн ачалăхĕпе яшлăхĕ çитнĕ тĕлнелле самана йĕрки ытла та хытă арканса кайнă: шуррисемпе хĕрлисем тытăçса çапăçнă, ял халăхĕ 1921 çулхи выçлăха чăтса ирттернĕ, прозаикăн ашшĕ ялти выçă ачасене тăрантмалли столовăй ĕçне йĕркелесе пынă т.ыт.те. Кулаксем писатель ашшĕне чут кăна çапса пăрахман. Каллех Агаков асаилĕвĕсене вулар: «Нумай çулсем иртсен çавăн чухнехи фактсем пурте тенĕ пекех «Пĕрре, çуркунне...» повеçе кĕрсе вырнаçрĕç». Çакă, паллах, Агаковăн приключениллĕ хайлавсем ăсталас туртăмĕ ăçтан тапса тухнине аванах кăтартать.

Вăл кăна та мар. Ашшĕ учитель, хастар активист, халăх ĕçĕн тăрăшуçи пулнăран вĕсен килĕнче пĕрмаях халăх хĕвĕшнĕ. Хăйĕн тĕрлĕ «хăнисемпе» хытă тавлашакан асли кĕçĕннин чунĕнче ĕмĕрлĕх вут чĕртнĕ, социаллă событисен хăйне евĕрлĕхне чун тĕпне хывма хистенĕ. Çитменнине, ун ашшех комбед секретарĕ те пулнă. Пуянсен пурлăхне туртса илмелли списоксене те çак килтех çырнă. Тĕрлĕ агитаторсемпе уполномоченнăйсем те ялан тенешкел вĕсем патĕнче çĕр каçнă. Пуянсем чышкă чăмăртаса юнанине те манман ача, вĕсен чӳречисене ватнине те манăçа кăларман. Выçлăх çул ачасен столовăйĕ валли кӳрсе килнĕ апат-çимĕçе ашшĕне шанса пани те ăшра тарăн йĕр хăварнă – кĕлет тăррине шăтарса таварсене вăрласа кайнă пулнă-çке, кайран вара халăх Яккăва хăйнех айăпланă...

Урăхла каласан, кĕçĕн çулсенчех вĕри лару-тăрăва лекет Леонид: вулăсран килекенсем кÿнĕ политикăллă информацие кăмăл варне хывать, ашшĕпе тавлашакансен шухăшĕсене сăнать. Мĕнпурĕ ку – ял пурнăçĕн социалăхĕ çав тапхăрта ытла та пăтăрмахлă, шаймăклă пулнине кăтартать. Çакă вара пулас писателĕн эстетика принципĕсене хывма тытăнать. Ахаль мар 1970 çулта писатель çапла хыпарлать автобиографире: «Приключениллĕ жанра юрататăп». Эппин, 20-мĕшпе 30-мĕш çулсен авантюрăлăхĕ Агаков чĕринче тарăн тымар ярать, каярахпа та ун пултарулăх çулне çав тĕлĕшлĕн шăнăрласа пырать. Кунсăр пуçне çав тапхăрăн историллĕ сăн-сăпатне çыравçă мĕнле ăнланнине те туятпăр çав пулăмра. Ку вара писатель эстетикин тата тепĕр енĕ. Çыравçă ÿкернĕ пурнăç чĕрĕ халлăн, чăнлавлăн, прототиплăн хывăнса пырать. 20-мĕш çулсен кĕвелĕкĕнчен вăй илнĕ пултарулăх, пурнăçăн социаллă енĕсем писателĕн историлле ăнне сĕтеклентереççĕ. Социаллă çав поэтика фольклор туртăмĕсемпе пĕтĕçет, психологилле витĕмлĕ характерсем калăплама хистет.

Çула май каласа хăвармалли тепĕр сăмах та пур. Маларах асăннă Хумма Çеменĕпе Чалтун та, Уярпа Краснов-Асли те самана пăтăрмахĕсене хăйсен ĕнсипе тÿснĕ. Тĕрлĕ пăтăрмахçăсем вĕсене кăна мар, ытти чылай сăмахçăна та пайтах шар кăтартнă. Обществăра пĕчĕккĕн пухăнса пыракан хура вĕчĕх, путсĕр пăтăрмахçăсен ăмсанăç-курайманлăхĕ 30-мĕш çулсем варринелле самана уттине пÿлме тытăнать. Хумма Çеменĕ тытнă ĕмĕтсене пурнăçлаймасăрах вилсе каять. В.Рсайăн çырма пăрахма тивет, В.Краснов-Аслине пуç иле ăсатаççĕ, Хв.Уяр Инçет Хĕвел тухăçне çул тытать. Кунти автобиографиллĕ сĕм каярах «Таната» романри Ухтиванăн ялтан тухса кайма тивнине çаврăнать. Çĕнĕ власть сăнарĕ, çапла, пăтăрмах урлă ÿкерĕнет. Митта та лагерь тертне тÿсет т.ыт.те.

Агаков çак лару-тăрăва сисмест-туймасть мар. «Пĕрре, çуркуннере...» Лява Уртемĕ, Махорка евĕр

сăнарсем курăмлăн сăнланни ăнсăртран кĕмсĕрт пулăм теме май килмĕ. Пурне те кăкласа кăларма, вĕсем йышши путсĕрсенчен тĕппи хăтăлма пулнă-ши? Хăй хайлавĕсенче ку ыйтусем çине хурав парас темест çамрăк çыравçă. Анчах самана хушшине такана çинчи шыва пăтратнă евĕр пăтратакан хурахсем, ултавçăсем, вăрттăн тăшмансем хывнă пăрнăç-карнăç куç умне кунта калăплăн тухать. Кун сăлтавĕсем историн вăл пурăннă кӳлĕмри кутăн-пуçăн авкаланчăксенче тупăнаççĕ. Çавна пулах-тăр повеçри Назар пурнăçĕнче прозаик ашшĕн кун-çулĕ ахрăмланать, çамрăк пултаруçăн тăван ялĕнчи событисем сăнара ӳкеççĕ. Повеçри мĕнпур авантюрăлă ĕç-пуçа чĕр вăй парса тăракан Лява Уртемĕ те пӳрнерен ĕмсе кăларнă персонаж мар, каччă ача çулĕсенчех сĕмленнĕ, хăй ăшĕнче пуçтаруллă калăпланă герой вăл.

Çав автобиографиллĕ пек хывăнса юлнă прототипсем пĕр Агаковшăн çеç кăтартуллă-и, ара? Уяр та, ав, «Таната» романри Ивукпа Шахрун (пăтăрмахçăсем) Яриле утарне тустарнине, Ухтивана чиксе пăрахнине сăнланă. Ку вăл – писатель ашшĕне çĕнĕ власть пуçĕсем хĕнесе пĕтернин ахрăмĕ. А.Артемьев хайлавĕсенче те сисĕнсех тăрать прототиплă çавнашкал техĕм, В.Пайменăн «Кĕперĕнчи» Мăрсапай сăнарĕнче те пур кунашкал автобиографилĕх...

Ашшĕ килĕнчи ĕç-пуç кăна йĕр хăварман Агаков чĕринче. Историллĕ сисĕм тымарĕсем те парка пулнă ун, хăй пурăннă тапхăрăн социаллă уйрăмлăхĕсене ăша тарăннăн хывнă вăл. Вĕсене сăнарлăн курнă. Саманапа уйрăм çын, историпе уйрăм çын хутшăнăвĕсем идеологиллĕ пусмăр çине те шак хураççĕ. Писатель хăй чунĕн биографине историллĕ сăнлав, характер сăнлавĕ урлă сăнани, сăнара хывни обществăн тӳнтерле аталанăвĕ пирки тарăн шухăша ӳкни те вăл. Çакă тăр ĕнтĕ Агаковăн историллĕ ăнĕ.

Самана хушши питĕ пăтăрмахлă пулнă ун чух: вĕçĕмех вăрçă-харçă пырать, «класлă кĕрешӳ» вăйланать. Чухăнсемпе пуянсем пĕр-пĕрин пуçне çиеççĕ, яла инçет

хĕсметрен (службăран) таврăннă салтаксем тĕрлĕ пăлхав-хумхану ҫинчен каласа параҫҫĕ, выҫлăх ҫул ял халăхĕ ҫавапа ҫулнăн тăкăнать, пуянсемпе власть хӳрешкисем чараксăр иртĕхеҫҫĕ... Шăпах ҫак вăхăтăн пăтăрмахлăхне ăша хывса юлать те каччă. Пăтăрмахлă тата шаймăклă поэтика ҫак тапхăрăн илемлĕх палли, содержанийĕ пуласса ăнкарать. Хайхи тĕрлĕрен приключени илĕрте пуҫлать ăна, анекдотра тупăнакан авантюрăлăх ҫыравҫă хывнă илемлĕ тĕнчен пĕр енĕ пулса хывăнать.

Асăннă «Пĕрре, ҫуркуннере...» кун паллисем питĕ курăмлă. Повеҫĕн тĕп геройĕсенчен пĕри, Тарас, салтакран 1922 ҫулхине, выҫлăх ҫул иртес тĕлелле, таврăнать, амăшĕпе шăллĕ выҫăпа аптранине курса хăраса ӳкет. Ҫул ҫинче иртнĕ пурнăҫне, ачалăхне «шĕкĕлчет» герой: ашшĕ кĕтĕве кĕрĕшнĕ ун, Мăкла Якур патакне ҫинĕ (лешĕ, ӳсĕрскер, килте тăракан пăрăва та асăрхаман, кĕтӳҫĕ ăна ҫухатса хăварнă пуль тенĕ); кĕҫ вăрҫа ăсанать ҫемье пуҫĕ, киле аманса таврăнать, кĕлетки ҫинче – командирсем хĕненĕ йĕрсем ун т.ыт.те.

Ялти ĕҫ-пуҫ та ҫав йĕрлĕ-тĕплĕ: Лява Уртемĕ пуянсен хӳрешкисене хăй тавра пухса чăмăртать, вăрманта пурăнакан хурахсене пулăшать, Махорка, Чалăшкуҫ, Пăшатан пек пилсĕрсене ял халăхне пăтратма тĕллеттерсе пурăнать. Авантюрăпа приключени – повесть стилĕн пĕр уйрăмлăхĕ, вĕсене пула сюжет ҫивĕч аталанса пырать, калу таппи событисем пĕр-пĕрин хыҫҫăн хиврен, ӳсĕмлĕн ылмашни ҫине таянать. Вăл ҫеҫ те мар. Тарасăн та, ун ашшĕн те инҫет ҫулсемпе ҫӳреме тивнĕ, ҫавăнпа ҫул сăнарĕ те историллĕ ăн сĕтекĕпе шăварăнать. Ҫĕн тĕнче хуҫисем, ҫĕнĕ идеологи ҫине таянса, пĕр халăха ҫине тăрсах икке пайланă: шуррисемпе хĕрлисем, пуянсемпе чухăнсем т.ыт.те. Этемĕн вара, кил сăпкинчен тухса ӳкме, пиншер ҫухрăм вăрҫă ҫулĕсемпе ҫӳреме тивнĕ, репрессие лексе шар курмалла пулнă. Ялта лăпкăн пурăнмалли май тупăнман ун (Тарас ашшĕ, Ухтиван...).

Кунашкал мехел каярахпа Агаков пултарулăхĕн никĕсне вырнаçать, ун пултарулăхĕн философиллĕ тĕртĕмне йĕркелет.«Юманлăхра çапла пулнă» повеçре, тĕслĕхрен, Илюк тавралли вăрă-хурах мĕн-мĕн хăтланса пурăннине сăнланă. Ниçта та ĕçлемен Малани пулăшнипе айван ачана Артистпа Матрос, Шатрипе Чалăшши вăрă ĕçне хăнăхтарма тытăнаççĕ. Кусем, Лява Уртемĕ пекех, истории çулне пăрнăçтаракансем.Вĕсене пула яшă арçын ача йăнăш хыççăн йăнăш тăвать, сăтăрла ĕç тума хутшăнать. Йĕрĕнчĕк çынсен суя романтики вăхăчĕпе, колонире, сĕвĕрĕлсе пĕтет Илюкăн, вăл тĕрĕс те тӳрĕ çул çине тухать.

«Чи хакли» романри ĕçсем те çав тĕлĕшлĕ: Кира тата Лариса (çамрăк хĕрсем) ял лавккинче таса кăмăлпа ĕçлесшĕн, анчах Кагаева сутăç вĕсене ура хурса чăрмантарать. Вăл ĕнтĕ тахçанах вăрăсен шайккипе çыхланса кайнă-мĕн.«Шанчăк» роман та приключенирен татăк мар. Анчах вăрçă вăхăтĕнчи приключени кунта героикăллă чĕм тупать. Вăрçăри терт-шар этем ăна чыслăн çĕнтерни урлă ӳкерĕнет. Çакă мĕнпурĕ Леонид Агаков тĕнчин тепĕр енне курăмлă тăвать. Тарасăн, сăмахран, шаймăклă-пăтăрмахлă ĕç-пуç юхăмне кĕрсе кайма, тĕрлĕ пăтăрмахçăпа кĕрешме тивет («Пĕрре, çуркунне...»). Илюк шаймăклă лару-тăрăва лексе чун суранĕ туянать, ăна хирĕç кĕрешсе кăмăлпа пиçĕхет («Юманлăхра...»). Ларисăпа Кира, Чатта поэт пăтăрмах тăллисене татаççĕ, Кагаева йыттисене тăрă шыв çине кăлараççĕ («Чи хакли»).

Калăплă (пысăк) жанр çапла хайланса пынине пула прозаик хире-хирĕç тăракан контрастлă икĕ ен тапăçăвĕ патне пырса тухать. Илюк, ăна пулăшакан милици, суд органĕсем вăр-хурахсене хирĕç тăраççĕ. Матроспа Артист, Маланипе Шатри йĕрĕсем Илюк йĕрне хирĕçле пулнипе туллинрех сăнарланаççĕ. Ку тапăçу ун хайлавĕсен жанрне, композици тытăмне хăйне евĕрлĕ тăвать. Хире-хирĕçлĕх стиль уйрăмлăхĕнче те сисĕнет: Матрос пеккисене, Кагаева тавралли сăтăрçăсене автор

ятнех шултралатнă, гипербола туса гротесклană сăрсемпе (ытла та хуратса, тĕксĕмлетсе) ӳкернĕ. Илюк, Лариса, Кира пек геройсемшĕн чун пурнăçĕ, кăмăл амаланăвĕ кирлĕрех. Ку ĕнтĕ антитеза мелĕ, Агаков прозин тĕп хатĕрĕсенчен пĕри.

Антитезăлăх пĕр йышши геройсенче вĕсен гротесклă карикатурăлăхне мала ӳкерет, тепĕр йышшисенче лирикăллă сисĕм-туйăм, романтикăллă çĕкленӳ палăрарах пырать. Карикатурăлăх тепĕр чух анекдот евĕрлĕрех, анчах çав анекдотра синкер тапса тăрать. Куна кура роман-повесть нумай сийлĕ, нумай саслă хайлав пулса хывăнаççĕ, нумай стиллĕ произведени пулса тăраççĕ. Палах кăмăл-сипет ыйтăвĕ те, истори проблеми те, çакна пулах, – нумай сийлĕ.

Тĕрлĕ сăпатлăн палăрса пыракан ик енлĕх Агаков тĕнчи романтикăллă хирĕç тăру çинче хывăннине кăтартать. Ытти романтиксем (Хв. Уяр, А.Артемьев) пекех, вăл та «пархатарсăр» геройсемпе ĕç-пуçа тӳрех (хатĕрлесе çитермесĕрех) хура тĕспе ӳкерме тытăнать, тĕксĕм енсен тӳпи-виçине ӳстерсех пырать, хатĕр характерсемпе, хатĕр ситуаци е лару-тăрупа ĕçлет. Çутă героя е ĕç-пуçа вара çĕкленӳллĕ хавха (пафос), романтикăллă сăрсен илемлĕхĕ, лирикăллă тата психологиллĕ стиль тивĕçет. Эппин, антитеза та, сатирăллă гротеск та, лирикăллă сăрсем те кунта илемлĕ тĕнче романтикăллă, икĕ енлĕ пулнине кăтартакан паллăсем.

Тепĕр уйрăмлăх та пур: кунашкал антитеза ытларах чухне повесть-романра палăрать. Апла пулсан вăл (çак хире-хирĕçлĕх) Агаков хайлакан калăплă жанр палли. Вăрçă вăхăтĕнчи кĕçĕн жанр (калав, новелла) вара, тĕслĕхрен, тĕпренех лирикăллă ун; сатирăллă калавсем кулăш объектне питлемелли гротескпа килĕшӳллĕрех. Кунта антитезăллă контраст калав-новелла жанрне сюжет енчен калăпласа, шăнăрласа тăмасть. Повесть-романра вара ялан тенешкел жанр хăйне евĕрлĕхĕ шăпах тарăнланса пыракан контрастра тупăнать.

Пăхса тухар-ха çак енчен «Пĕрре çуркунне...» повеçе. «Пархатарсăр» сăнарсенче хура сăрпа сăрламалли енсене ытларах асăрханă, вĕсен тискерле ĕçĕсене ытларах кăтартнă. Çапла туса писатель историн тӳнтерелле кайнă сăн-сăпатне, ăшĕ-чиккине сăнанă. Çутă сăнарлă этемсем маттур, çивĕч, кăмăлĕпе таса, ĕмĕчĕпе çунатлă. Çак икĕ енлĕх сăнланас тĕнчене ирĕксĕрех хирĕç тăруллă вăйсен кĕрешĕвĕ пек курма хистет, повесть никĕсĕнче романтикăллă антитеза черетленсе пыни выртать. Чăнах та, пĕр сыпăкĕ унта çутă сăнарсене тивĕçет, тепри – тĕксĕммисене. Мĕн вĕçне çитичченех калуçă сыпăксене çакнашкал ылмаштарса пырать.

Ку мехел – Агаковăн приключенилĕхне тĕпрен шăнăрласа тăракан услови. Событисен таппи çивĕч те хĕрӳ. Ак Лява Уртемĕ патĕнчен тухнă Пăшатан Назар лашине вăрлама тăрать; ак ăна Тарас хăваласа çитсе тытать; кĕç вăрра халăх умне тăратаççĕ, ял советĕнчи вăрттăн сăтăрçă Иливан Пăшатана пĕлменçи туни çиеле тухать. Тепĕр темиçе сыпăкран ачасем валли пĕçернĕ апатра шăши вилли тупăнни çинчен пĕлтерет калуçă; ун хыççăнах Уртем Каçăр Куçмапа Иливана хупса лартнă çĕртен тартма ăшталанса çӳрени тухать куç умне т.ыт.те. Çакна кура калу татăк-кĕсĕкрех пек те хайланать темелле, анчах Тараспа ун йышĕн ĕçĕ çав сыпăксене çирĕп шăнăрлă пĕр йĕре çыхса пырать. Кĕтмен пăтăрмахсен таппи хирĕç тăруллă тепĕр енĕн динамикине те ӳстерет. Хире-хирĕçле йĕрсем пĕр-пĕринпе питрен-пит çапăннине пула сюжет та хивреленет.

Сюжетăн антитезăллă хĕрĕвне тытса пыракан пĕр мел – Тарас сăнарĕ. Ун тавралла хастар чĕреллĕ, мал ĕмĕтлĕ яшсем (Верук, Исай, Микиш, Марине т.ыт.те) чăмăртанаççĕ, таса чунлă, ĕçчен ватăсем (Назар, Кулине инке) пухăнаççĕ. Тарас граждан вăрçи вучĕ витĕр тухнă ĕçчен. Вăл ĕнтĕ истори тӳнтерне ашшĕ пекех хăй ĕнсипе туйнă. Арканса юхăннă саманана тĕреклетес, ял-йыша пулăшас ĕçе вăл пĕтĕм чунĕ-юнĕпе кӳлĕнет, арканас

саманана ура çине тăратма вăй хурать. Туйăмĕпе çивĕч, тавра курăмĕпе аслă этем, вăл истори çулĕ пӳлĕннине, общество аталанăвĕ пĕр тăрук арканса юхăннине, ку юхăмăн анлăлăхне куç кĕретĕн курать: «...пристаньсенче, чугун çул станцийĕсенче халăх вĕçĕмсĕр йăшăлтатать – ватти, вĕтти, арçынĕ, хĕрарăмĕ; <...> вĕсем çăкăрлă вырăнсене, ăçта та пулин Çĕпĕрелле, Украинăналла, кайма тухнă пулĕ, анчах ниçтах та çитеймен. Пăрахутсемпе пуйăссем çине лараймасăр эрни-эрнипе выртаççĕ вĕсем, çавăнтах хăйсем мĕн пур-çуккине çиеççĕ, çав таврашрах тула каяççĕ, çавăнтах вилеççĕ...».

Ку вăл – выçлăх çулĕ кӳнĕ панорама, çĕршывăн инкеклĕ ани. Ял сăн-сăпачĕ те çакна майăн: «сăрт хĕрринчи çуртсем нĕрсĕр хура капансем пек», «чĕрене çӳçентермелле тĕслĕ», «сас-чĕв те çук, чăннипех кунта пурте вилсе пĕтнĕ пек туйăнать». Апла тăк геройсен ушкăнĕсем çеç мар, самани те контрастла сăнсем çинче никĕсленет. Анчах кăшт вăхăт иртсен Тарас инçетри тусĕ патне урăхла çырать: «...ĕççем юсанма пуçларĕç темелле, çамрăксене пĕрлештертĕмĕр. <...> Ял пурнăçне епле улăштарса çĕнетсе пымаллине тĕкĕр çинчи пек куратăп...» Çак ĕненӳ ялта çеç çуралман геройăн, виçĕ çул хушши пăшал тытса çĕршыва хӳтĕленĕ Тарас. Ку çав контрастăн тата тепĕр пайăрăмĕ, вăл геройсен, çĕршывăн историллĕ биографийĕнче паларни. Ку, хайхи, ялти кĕрешӳре те çирĕп пулма пулăшать ăна.

Пĕр шутласан, Лява Уртемĕпе Махорка тупса кăларнă тĕрлĕрен-тĕрлĕ пăтăрмах Тараспа ун йышне аптратса та ӳкермелле пек. Çук, «ал хăнăхнăçем», сисĕм-туйăмĕ те çивĕчленсех пырать вĕсен, çавна май хастарлăхĕ татах ӳсет, героикăллă сĕм йышăнать. Ялан сыхă кăмăлласкер, Варук ашшĕн сассине илтнĕ-илтмен лаша вăрри хыççăн чупать. Вăрри Махорка эшкерĕнчи Пăшатан-мĕн. Çăмăл пулмасса пĕлнĕ çĕртех, çамрăксене ячейкăна чăмăртать. Ачасене ячейкăна явăçтарас мар тенĕ ваттисене чăтăмлăн ăнлантарать, политикăри лару-тăрупа паллаштарать, хĕрарăмсене ял ĕçĕнче ĕçлеме

яваҫтарать. Тарас ялан халăх ҫинче: пухусем ирттерет, района ҫӳрет; вăл – ҫутă та идеаллă сăнар, таса чĕреллĕ этем, пурнăҫ йывăрлăхĕсене ӳсĕмлĕн ҫĕнтерекен ҫын. Сюжет ăна пула тĕрлĕ пăтăрмаха сирни, ҫĕнтерни пек хывăнса пырать.

Тарасăн сюжетри вырăнне тĕрĕс ăнланни ҫакна кăтартать: тĕрлĕ авантюрăпа приключенире пурнăҫ малашлăхĕ тупăнмасть. Пур шаймăк-таймăка сирсе ывăтни кăна истори ҫулне такăрлама май кӳрет. Мĕн сирнĕҫемĕн, ҫĕнтернĕҫемĕн Тарасăн хастарлăхĕ, кăмăл ҫирĕплĕхĕ сарăларах пырать, опыт пухăнать. Ял халăхĕн истори умĕнчи, хирĕҫле вăйсем умĕнчи шиклĕхĕ, хăюсăрлăхĕ чакнăҫем чакать. Ҫынсен социаллă сисĕмĕ вăйланать. Ку вара писателĕн историллĕ ăнне кăна мар, геройсен историллĕ шухăш-туйăмне те кĕретлет. Ҫакна Агаков Хв. Уярпа, М.Илпекпе пĕр шайлăн кăтартса пырать, Чалтун, Трубина хывнă йĕрсене тарăнлатать.

Сюжетăн антитезăллă йĕрне чĕр вăй паракан тепĕр сăнар – Лява Уртемĕ. Ун тавралла – кулак хӳрешкисем, вăр-хурах эшкерĕ. Хăйсемшĕн ҫеҫ чăрманакан Каҫăр Куҫмапа Иливан ял советне вырнаҫнă, халăх ĕҫне шалтан, тымартан сиенлеме тăрăшаҫҫĕ вĕсем. Вĕсен сăтăрла ĕҫĕсем ял-ял тавралла хурах пусса ҫӳрекен Махорка, Чалăшкуҫ пек пилсĕрсен хăтланăшĕсемпе пĕр тĕлĕшлĕ. Уртем те хурах йăхĕнчен. Ашшĕ ун почтăна ҫаратса пуйнă-мĕн.

Аса илĕр-ха: «Танатари» Илле те пуян майрана ҫаратса пуйнăччĕ. М.Илпекĕн «Хура ҫăкăрĕнчи» Шерккей аслашшĕ те ҫак енпех ҫылăха кĕнĕ. Эппин, Лява та, Илле те хурахла шухăшпа ҫӳрени ăнсăртран мар. Шăпах 30-мĕш ҫулсенче пысăккăн курăнса каяҫҫĕ вăр-хурах сăнарĕсем. Писательсем пĕр саслă пулса, чăвашсен фольклорлă прозинче палăрнă террористсене вăр-хураха курăмлăн сăнлаҫҫĕ. Ҫак сăнлавра тупăннă социаллă типсем, ҫапла, чăвашсен илемлĕ ăнĕнчен тымарланса тухаҫҫĕ. Ку вăл, палах, этнопоэтика палăрăмĕ, чăваш прозин эстетикăллă тавракурăмĕ нациллĕ уйрăмĕсене

тĕпе хуни. Л.Агаков геройĕсем те çак шухăша аванах çирĕплетеççĕ. Таврара пĕртен-пĕр пуян пулса тăнă Лява «темиçе арман тытнă, чăпта çаптарнă, çăмарта, пан улми, çăм, çĕтĕк-çатăк» пухнă.

Ĕмĕтĕнче «кĕçех чăваш патши» пулас ĕмĕт усранă вăл. Фантазиллĕ, карикатура евĕрлĕ çак ĕмĕт тулаймасть, вырăс улпучĕн ăйăрне вăрланăскерне, лешсем вĕлермеллех хĕненĕ. Уртем пиччĕшĕ те, Çемен те, старостăна кĕнĕскер, хăйне «ял патши вырăнне» хурса кăкăр çапнă, ял тăрăх «Я хто-о?» тесе кăшкăрашса çӳренĕ. — «Вĕлере-еп! Тыттарса яра-ап! Тĕрмере çĕрте-еп!..» Ку та анекдотлăрах лару-тăру. Апла пулин те ку анекдот çакнашкал геройсен хаярлăхне сĕвĕртмест. Анекдот, эппин, икĕ енлĕ: унра шӳтлĕ, карикатурăллă пушăлăх та пур, трагеди техĕмĕ тутаннă трагизм та. Çапах та, ашшĕпе пĕрех, Çемен çĕре кĕрет. Ӳсĕрскер шартлама сивĕре шăнса вилет вăл. Уртем шăллĕ те пуçне çиет: продотряд тыррине туртса илме тапăннăскерне, ăна персе пăрахаççĕ.

Тӳрех курăнать: сатирăллăн сăнланă пĕрешкел эпизодсем черетленсе пыраççĕ. Черетленӳ мелĕ-мехелĕ иронипе, сатирăпа тачă çыхăннă. Кунашкал поэтика Хв. Уярăн Ярилинче те, Иллинче те аван палăрать, М.Илпекĕн романĕнче те нумай вырăн йышăнать. Уярпа Агаков ку енпе Иван Мучие аса илтереççĕ, Илпек – Гоголе. Черетленӳллĕ событисем, хайхи, шӳтпе питĕ тачă çыхăннă. Кашниех вĕсем приключениллĕ кăна мар, авантюрăллă та. Черетленӳ градаци йĕркелет; событисене те, геройсене те ӳстеререх хакланă, сатирăллăн кăтартнă. Çак никĕс çинче «шăтса ӳснĕ» Уртемре те кунашкал енсем тĕпре. Чăнах та, Махорка эшкерĕ валли патрон, апат-çимĕç, эрех-сăра хатĕрлесе пурăнать Лява ывăлĕ, укçа янтăлать. Вăлах Пăшатана лаша вăрлама тĕллетерет. Махорка хăй патне пырса тухсан ял ачисем валли турттарса килнĕ апат-çимĕçе вăрлама хистет.

Уртем – тĕрлĕ пăтăрмаха йĕркелесе тăракан тĕпкĕч. Ун тавра тĕрлĕ катăк-тăмсай (Микстур Михали)

явӑнать, ун патнех – ҫӗрлешер – тӗрлӗ хурах (Чалӑшкуҫ, Пӑшатан) киле-киле тӑрать. Тӳрех паллӑ: халӑх ӑнӗнчи синкерлӗ пӑтӑрмахлӑх, шаймаклӑх анекдотпа пуянланать, анектодри трагедилӗхе ҫиеле кӑларать. Чӑваш ҫыннин ҫакнашкал сисӗм-туйӑмне вӑхӑчӗпе Хв. Акивер тӗпе кӑларать. Ун калавӗ-повеҫӗ ялан техешкел анекдот ҫинче никӗсленет, шӳт трагедие ҫаврӑнать. Ку ӗнтӗ ҫакна кӑтартакан паллӑ. Пӑтӑрмахлӑх пулӑмӗ, анекдотла ситуацисем, вӗсен синкерлӗ содержанийӗ чӑваш прозишӗн питӗ пӗлтерӗшлӗ.

Махорка та пӑтӑрмахлӑ тӗрлӗрен ӗҫ-пуҫа хӑй тавра шӑнӑрласа пуҫтаракан персонаж. Ун хӑтланкаларӑшӗсем ялан тискер, синкерлӗ. Хура чунлӑ ҫак бандит Хв. Уярӑн Шахрунӗнчи хурахла, террорла тыткаларӑша аса илтерет; вӑрманта пытанса пурӑнать вӑл, халӑх пурлӑхне ҫаратать, ҫын вӗлерет, ҫамрӑк хӗрсене пусмӑрлать. Хӑй вӑхӑтӗнче ҫак этем патша ҫарӗнчи офицер пулнӑ, Василий Разумов хушаматпа ҫӳренӗ. Каярахпа хӑй валли хушма ят тупнӑ – Махорка. Ун пурнӑҫ принципӗ – вӗчӗхӳллӗ таварӑу: «Таварӑтӑп, пуриншӗн те таварӑтӑп! Мана нимсӗр хӑварнӑшӑн та, тӗрмере хупса усранӑшӑн та, аттен пӗтӗм пурлӑхне туртса илнӗшӗн те», – тупа тӑвать хурах хӑй умӗнче. Хӗсӗк тавра курӑмлӑскер, пӗр ял ҫыннисене, тавӑрнипе самана улшӑнас ҫуккине ӑнкараймасть вӑл.

Ӗҫсе супсан ҫак прапорщик пушшех кулӑшла, анекдотла: «хама чинсӑр хӑварнӑшӑн» таварӑтӑп тесе ҫухрашать хӑй пеккисен йышӗнче. «Манӑн хамӑн *ҫар* пулать... *Полк!*» «А эп – *полковник* пулатӑп», «...Эп халь Разумов мар, эп халь – Махорка...» (курсив манӑн. – *Г.Ф.*). Лява «патша», Лява Ҫеменӗ «ял патши» тесе янратнипе пӗрех ку, сӑнламалли мелӗ те ҫавах – сатирӑллӑ гротеск. Лява йӑхӗнчи, Махоркӑри кунашкал енсем Агаков хывнӑ шаймӑклӑхӑн (приключенин) тата тепӗр уйрӑмлӑхне – сатирӑллӑ гротеска – палӑртма май параҫҫӗ. Ку ӗнтӗ пурнӑҫ тӳнтерӗн палли; ҫын шутлӑ ят-шыв та тивӗҫеймест кунашкал персонажсене. Махоркӑна

çын теме те йывăр. Уртем арăмĕн шăллĕ, вăл ытла та чыссăр – хурах шайкине явăçса поездсене тапăнать, «пассажирсене пăшалсемпе хăратса ним юлмиччен» çарамаслантарать; кайран хăй çĕнĕ ушкăн пухать, «халăха терроорлама» пикенет. Анчах вăрăма тăсăлаймасть ун террорĕ, вăл милици аллине лекет. Ку ĕнтĕ Махорка йышши геройсен историллĕ перспективи ансăр та кĕске пулнине систерет.

Антитеза, паллах, сюжета йĕркелес тĕлĕшрен кăна кирлĕ мар çыравçăна. Хире-хирĕçлĕх повеçре пĕтĕм сăнарланă ĕç-пуçа, сăнарланă саманан тытăмне, вăхăтăн пăтăрмахлă таппине ытамлать. Ак епле пуçланать хайлав:

«Садсем чечекре...

Яштак чиесем, çĕмĕрт йывăççисем, çатрака туратлă улмуççисем – пурте шап-шурă та çемçе тумпа витĕннĕ. <...> Вĕсем ытармалла мар тутлă, кăмăла йăпатакан шăршă сарса лараççĕ. Кăнтăрла ку ырлăха пит асăрхасах каймастăн, анчах каçхине вара <...> кирек кам та киленет çурхи чечексен шăршипе, вĕсен тутипе тулнă сывлăша пĕтĕм кăкрипе сывласа çăтать». Кĕç урăх лару-тăру килет куç умне: çынсем хĕл каçах мăянпа, йĕкелпе тăранса чун усранă; чиркӳре «вилĕм кĕлли» туман кун иртмен; каччăсемпе хĕрсем вăййа тухмаççĕ, «юрă-сăвă, купăс сасси таврашĕ илтĕнмест»; ял «вилнĕ пек» тăрать.

Пĕрремĕш абзацсенченех, çапла, пĕр аслă, калăплă хирĕç тăру тĕвĕлене пуçлать, тĕрлĕ енсен тапăçăвĕ сюжета сăрхăнса кĕрет, ăна антитезăпа тутлăхлантарать. Чăнах та, пурнăçа чĕкетсе-юсаса яма шанăç çук та пек – сак çинчи карчăкăн вырăн çинчен тăма та халĕ çитмест, апат-çимĕç пĕтсе çитнĕ, пĕрмай шыв ĕçнипе вăйĕ татах чакать ун. «Шел, Тараса кураймасăрах вилетĕп», – хуçăлать вăл кăмăлĕпе, салтакри ывăлне курса юлаймасран шикленет. Анчах çав каçах вăйпитти ывăлĕ (çуркунне пек яшă çамрăк) килсе çитет. Вăл таврăннипе пĕр çемье кăна мар, пĕтĕм ял çĕнĕ ĕненӳ, çирĕп шанăç тупать. Ĕнтĕ карчăк та расна хавал вăркатать хăй чĕринче: «Этемлех пурăнăпăр-и-ха тен малашне...» Ку

хăех вара садсем чечеке ларнин пĕлтерĕшне анлăлатать – çут çанталăк чечеклене-ешере пуçларĕ тĕк пурнăç пĕтмен-ха апла, шанăçĕ сисĕнсех тăрать.

Анчах çак тĕллеве пурнăçлама ансат пулман. Ахальтен мар Тарас кил карти варринчи урапа кустăрмасăр, çара çуна хăрах тупанлă пулнине асăрхать; тăпсинчен вĕçерĕннĕ алăк «хăяккăн выртать»; çурт-мĕн тăрне витнĕ улăм çине вĕлтĕрен, мăян шăтса тухнă; «лаç пекки тӳнес патнех çитнĕ». Шăллĕ – выçă, амăшĕ паян-ыран вилесле выртать. Ку, паллах, пĕр хусканусăр, аталанусăр пурнăç палли темелле: йăлтах тӳнет, çĕрет, йăшать, арканать; кӳлсе ĕçе каяс çуни-урапи ванчăк. Çапах та повесть сюжечĕ кĕçех хĕрӳн те çивĕччĕн аталанма пуçлать. Событисем пĕрин хыççăн тепри çав тери хăвăрт (шаймăклă хайлавсенче вăл кирек хăçан та çапла) аталана пуçлаççĕ.

Хайлав поэтикине шăнăрлакан, ун идейине сăнарлăн палăртакан тĕп мехел кунта – событисем, вĕсен динамики. Çак «васкавлăх», хивреленӳ хăй ытамне пăтăрмахлă тĕрлĕ ĕç-пуçа явса илет (çак та шаймăклă хайлавсен яланхи палли), хушăран фантастика пек курăнса каякан тĕлĕксемпе тĕсленет (ку та шаймăклă стилĕн анлăлăхнех кăтартать). Антитезăра, эппин, социаллă, анлă панорама курăнса каять, историн уйрăм тапхăрĕ, ун хирĕçӳлĕхĕ. Историн конкретлă тапхăрне социаллăн сăнлани. Чарăнса ларнă вăхăт, вилĕм патне çитнĕ халăх пурнăçĕ чĕрĕлет кăна та мар, ӳсĕмленет, хăвăртланать.

«Пĕрре, çуркунне...» – çак ят тӳрех повесть *пĕррехинче* мĕн-мĕн *пулса иртнине* сăнлас, сăнас тĕллевлĕ пулнине астутарать. Сюжетăн татăк-кĕсĕк йĕрпе пыракан юхăмне калуçă тĕрлĕ стильсен ик енлĕн амаланакан хăйне евĕрлĕхĕпе палăртрĕ. Çапах та *пĕррехинче* текен пулăм повесть идейине Уртем сăнарĕ тытса шăнăрласа тăракан сатирăлăх енне сулăнтарать. Тараспа çыхăннă лирикăпа психологи таппи повесть ятĕнче курăнмасть.

«Ылтăн вăчăра» вара ку тĕлĕшрен пачах ăрасна. Кунта та лирика таппи вăйлă, тен, тата та вăйлăрах та. *Ылтăн вăчăра* – Ванюшкăпа Санькăшăн тавăру символĕ, анлă метафора. Çак символра вĕсен ашшĕ-амăшĕн шăпи палăрать, геройсем вăчăрара аслисен умĕнчи сăваплă тивĕçе кураççĕ, ăна нимĕçсене ашшĕ-амăш юнĕшĕн тавăрмалли йыхрав пек ăнланаççĕ. Ку ылтăн – чун тирпейĕ-таси, ун йыхравĕ – тăван çĕршыва таптакан ирсĕр тăшмана пĕтерме кирлине ăнкарни, ăшран туйса тăни. Метафора-символ кунашкал анлă пĕлтерĕш йышăнни лирикăллă сюжетăн хăйевĕрлĕхĕ çинчен астутарать.

Генрих Шварц офицершăн ылтăн урăх пĕлтерĕшлĕ, вăчăра çак фашистри çăткăнлăха, пилсĕр хапсăнчăклăха, вăрă чунлă этемĕн тискерлĕхне ӳтлентерет. Тăшман сăнарне те çав метафорăпа калăпланă; ку анлă метафора повеçĕн лирикăллă туртăмĕ çинех шак хурать. Пĕрлех, ун (çак метафорăн) ик енлĕхĕ Л.Агаков пултарулăхĕшĕн ялан тĕпре тăракан антитеза çинчен те астутарать.

Чăнах та, вăрçă çулĕсенче çыравçăн лирикăлăхĕ тата ытларах вăйланать, кĕçĕн жанрлă хайлавĕсене вăл тăтăшах лирикăллă новелла пек хывать. Асăннă повеçре те *ылтăн вăчăра* метафора ун пĕтĕм идейине сĕткен парать. Вăл Санька ашшĕн пулнă-мĕн, ăна 1938 çулта Хасан кӳлли патĕнче «Япони самурайĕсене хирĕç паттăр çапăçнăшăн тав туса оборона халăх комиссарĕ» панă. Шварц нимĕç вара çав парнене туртса илет, Санька амăшне персе пăрахать. Партизансен отрядне çырăннă ачасем (разведкăра çӳренĕ чух е нимĕçсен аллине лексен) çак офицера час-часах кураççĕ. Вăр-хурах вăчăрана çирен ямасăр çакса çӳрет иккен, ачасене тавăру çинчен аса илтерсех тăрать.

Повесть те хайхи тавăруçăсем фашиста йĕрленĕ евĕр калăпланать. Ку поэтика ĕнтĕ малтанхи повеçри евĕр мар, мĕншĕн тесен приключени çутă романтика хавхи хывать. Кунта та приключениллĕ событисен хăйне евĕр юхăмĕ ум илнĕ, анчах кашни çавнашкал эпизод

героикăллă, вĕсенче ачасен хастарлăхĕпе тавçăрулăхĕ ÿснĕçем ÿсет. Тепĕр шухăш сĕвемĕ те пур. *Ылтăн вăчăра* метафора сюжета аталантарма кирлĕ вăрттăнлăх та. Тупсăмĕ ун тÿрех уçăлмасть, сюжет йĕрĕпе Ванюшкăн çав вăрттăна уçма самай «утма тивет».

Ак пĕрремĕш сцена: ял çине хуп-хура самолетсем вĕçсе килеççĕ, бомба тăкаççĕ. Тепĕртакран ылханлă салтаксем çитеççĕ, вĕсен пуçĕнче – ырханкка офицер, Генрих Шварц. «Ванюшка сасартăк ун кăкрин сулахай енче ылтăн вăчăра çакăнса тăнине асăрхарĕ». «Вăчăраллă офицер» яла çунтарса ярать, ял халăхне тĕппи пере-пере пăрахтарать, çăлăнасса пĕртен-пĕр Ванюшка кăна çăлăнать.

Ку – интрига, сюжета хиврелентермелли мехел. Тек ĕнтĕ ачасен шăпи вĕçĕмех çав офицер тавралла явăнĕ, ăна тытса кăнтас тĕллев пĕтĕм повеçе шăнăрла пуçлĕ. Сюжетăн, композици тытăмĕн кунашкал тĕллеве пăхăннă авкаланчăкĕсем пĕрин хыççăн тепри хăвăрттăн (приключени палли) ыткăнса пыра пуçлаççĕ: пĕр-пĕччен ача партизансен отрядне пырса тухать; унтан тухса кайса нимĕçсен аллине лекет, лешсем ăна Германие хăваласа каймалли йыша ертеççĕ; поездпа каякан Санькăпа Ванюшка тарса хăтăлаççĕ, тепĕр партизан отрядне лекеççĕ; отрядра вĕсем часах ăста разведчик пулса тăраççĕ, полицая тытса таврăнаççĕ т.ыт.те.

Ку эпизодсен юххине харкам хăй ритм кÿреконни – Шварц (вăл Уртем пекех пăтăрмахçă), ун кăкри çинчи ылтăн вăчăра. Отрядран (малтанхи хут) тухса каяс умĕн Ванюшкăн куçĕ умне каллех çав нимĕç тухса тăрать, кăкри çинче ун «ылтăн вăчăра ялтăртатать». Тухса кайсан та çав фашистах ун ăс-пуçĕнче: отрядри фельдшертан Шварц полицай отрячĕ йĕркелесшĕн пулнине илтнĕскер, «полицай пуласшăн» вăл, Шварца персе пăрахасшăн. Ку ĕнтĕ – иккĕмĕш, виççĕмĕш эпизодсем. Ак тата тепри: Германие ăсатас халăха пуйăс çине лартнă чух каллех çав ирсĕр тăшман пулать ача куçĕ тĕлне: «Ку –

хайхи каратель, çĕр хут ылханлă Шварц». Ун хыççăн тин тупăнать вăчăра вăрттăнĕ, тыткăна лекнисен хушшинчи Санька калавĕнче уçăлать.

Акă детектив мелĕ хывăнчĕ: пĕр-пĕр вăрттăнлăха майĕпен уçса пыни сюжета вăчăра тавра явăнтара-явăнтара калуçă детективлă интрига йĕркелерĕ, вулакан кăмăлне хĕртсе-хĕмлентерсе ячĕ. Детективпа шаймăклăх пĕр кăкранах шăтса ӳснĕ, анчах вăхăчĕпе вĕсем хăйле, расна сăн-сăпат тупнă. Шыравпа çыхăннăран, детектив васкавсăр аталанать, сюжет тĕрлĕ авкаланчăксем тăвать. Ку мехелре Л.Агаков çыракан шаймăклă прозăн тата тепĕр енĕ курăмлăн палăрать: писатель приключение детективпа пĕтĕçтерет, событисен хăвăртланнă таппинче шырав идейи палăра пуçлать. Вăчăра вăрттăнлăхĕ тупăннă хыççăнхи сюжет, паллах, тата вĕрирех, композици тата хăйне евĕрлĕрех икĕ йĕр пĕр-пĕринпе ытларах та ытларах çапăнаççĕ, конфликт çивĕчленсех пырать. Агаковăн композици тытăмĕ яланхиллех хывăнать: лирикăллă сюжет таппи приключениллĕ сюжетпа, детективлă юхăмпа пĕтĕçет. Повесть вĕçĕнче Ванюшка фашиста персе пăрахать, вăчăра «каллех хăйĕн хуçи патне таврăнать». Вăчăра кăна та мар, ашшĕн чысĕ, ун паттăр ячĕ.

Повесть туратлана-туратлана хайланса пырать. Ванюшкăна, ялтан кайсан, вăрманта партизансем тупаççĕ. Ăна Федор Иванович фельдшер сыватать, çавăнпа ун сăнарĕ те калăплăн ӳкерĕне пуçлать. Германие ăсатас йышра каччă Санькăпа паллашать, ун сăнарĕ те вĕçĕмех туллиленсе пыма тытăнать. Икĕ ачан шăпи тӳрремĕнех Шварцпа çыхăннă, писатель ун сăнарне анлăлатмаллине те манмасть. Туссем иккĕшĕ те тĕлĕнмелле паттăр та тавçăруллă Михаçпа разведкăна çӳреççĕ, Михаç чунĕ-чĕри те уçăлсах пырать повеçре т.ыт.те.

Сăнарланă кашни геройăн, çапла, хăй шăпи, кун-çулĕ; анчах хайлава, вăл тулли, нумай енлĕ пулсан та, роман теме çук. Сатира та, детектив та, пăтăрмахлăх та,

лирикăллă йĕрсем те пĕр пĕтĕм тĕп йĕре, шаймăклă стиле пăхăнса тăраççĕ кунта. Романра вара нумай сий, нумай стиль, нумай саслăх ытларах палăрать. Тишкернĕ икĕ повеçре калу пĕр сăпатлă хывăнать, пăтăрмахлă, детективлă, шаймăклă событисене сыпăнтарнин лирикăллă таппи пулса йĕркеленет. Ахальтен мар повеçсене ялан тенешкел писатель аталантарнă ĕç-пуçăн тĕппи-йĕрне пур енлĕн сăлтавласа ăнлантаракан пĕчĕк эпилогсемпе вĕçлет. Çав енчен Агаков повеçĕсем новелла евĕртерех, вĕсенче ялан ĕç-хĕл пĕрлĕхĕ (вырăсла: принцип единства действия) мала ӳкет. «Ылтăн вăчăрара» та çаплах: сăмах ялан вăчăра тавралла сыпăнать, унпа пуçланса унпах вĕçленет. «Пĕрре, çуркунне...» те çав сывлăшлă – калу тăтăшах Уртемпе ун хӳрешкисем тунă ирсĕр ĕçсемпе çыхăнать.

Тепрер чух повеçри тĕрлĕрен событисемпе пĕр-пĕр герой-калавçă паллаштарать. Мĕнпе кăтартуллă-ши ку? Герой – субъективлă сăнар, пурнăçа вăл хăй чухланă-пĕлнĕ пек кăна йĕрле-йĕрле сăнлать. «Пĕр хулара» повеçех акă: ун никĕсне Мускав çывăхĕнчи вырăс ачи, Юра Репкин калавĕ выртнă. Ун пурнăçа пĕлесси-тăвасси те пысăках мар-ха, улттăмĕш класс кăна пĕтернĕ. «...Манăн атте граждан вăрçи вăхăтĕнчех взвод командирĕ пулнă», – пуçлать вăл хăй эпопейине. Ашшĕне кĕтсе илнипе, ăна каллех фронта ăсатнипе вĕçленет хайлав.

Кунта та хăйне евĕрлĕн аталанса ӳтленнĕ сăнарсем чылай: Сережăпа Ваççа Авдеевсем, ачасене пулăшакан типографи директорĕ (листовкăсем пичетлеççĕ каччăсем, хулара çыпăçтарса çӳреççĕ), чăваш çĕрĕнче çуралнă, вăрçăра аманнă лейтенант (ăна ачасем тупаççĕ, нимĕçсенчен пытарса вăрттăн сиплеççĕ) т.ыт.те. Çапах та вăл сăнарсем те калавçă-герой курнă-ăнланнă пек сăнланаççĕ. Чăн та,ултă класс пĕтернĕ ача кăна пĕтĕм повеçе тытса-шăнăрласа тăни ĕненӳсĕртерех те пуль. Çавăнпа ун калавĕнче ĕç-пуçа тарăнрах пĕлекен калуçă алли те сисĕнет, анчах вăл та герой чĕлхипех калаçать.

«Л.Агаков, – çырать Н.Дедушкин тĕпчевçĕ, – хăйĕн çамрăк геройĕсен психологине, шухăш-кăмăлне лайăх пĕлет. Пурте вĕсен ача-пăчалла пулса пырать, пурне те хăйсем ăнланнă пек тума пултараççĕ, çав вăхăтрах кирек хăш ĕçе те аслисенчен вĕренсе пыма тăрăшаççĕ».

Ку – тĕрĕсех. «Пĕр хулара» повеçри типографи директорĕ ăс вĕрентсе пырать ара кĕрсе пыракан çамрăксене, «Ылтăн вăчăрара» – Михаç разведчик. Нумай паттăрла ĕç тăваççĕ ачасем. Полицайсене тытса отряда илсе çитереççĕ, нимĕçсем юсанă кĕпере сирпĕтеççĕ, нимĕç офицерне тытаççĕ, разведкăна ним хăрами çӳреççĕ («Ылтăн вăчăра»). Оккупацири халăха листовкăсем сарса фронтри лару-тăрупа паллаштараççĕ, нимĕçсен тискерлĕхĕ çинчен пĕлтереççĕ, фашистсем Хĕрлĕ площадьре парад ирттерме сĕмленни кăлăхран хывăх вĕçтерни пулнине кăтартаççĕ, аманнă салтаксене вăрттăн сиплесе ура çине тăратаççĕ т.ыт.те.

Тĕлĕнмелли çук: Юрăпа Коля ашшĕ – граждан вăрçинчех пиçĕхнĕ салтак, ун чухне вăл командир пулнă, нумай хут аманнă. Тăван çĕршĕн вăл чуна парса çапăçнă, фронта хăй ирĕкĕпе тухса кайнă. Çак çемьере çитĕннĕ ачасем тăшман умĕнче алă усса ларма пултарайман. Кăткăс та йывăр пурнăçра вĕсем хăйсемех паттăрла ĕç тумалли майсем тупаççĕ. Çакнашкал условисенче вĕсем хăвăртрах ӳсеççĕ, çитĕнсе çитичченех аслисен ăсĕпе пуянланаççĕ («Пĕр хулара»).

«Салтак ачисем» повесть те ара тин кĕрекен яшсене сăнлать. ...Вăрçă хускатнă çынсем çапăçу пыракан çĕрсенчен хĕвел тухăçнелле куçаççĕ, Чăваш республикине те çитеççĕ. Эстонецсемпе белоруссем хушшинче юлташлă çыхăнусем тĕвĕленеççĕ, ачасем пĕр-пĕринпе туслашсах каяççĕ. Ачасем хушшинчи туслăх, вăл пур йывăра та çĕнтерме пулăшни Агаковшăн юратнă проблема темелле. Ванюшкăпа Санька та хăйсен туслăхĕпе çĕр тĕслĕ йывăра çĕнтереççĕ, пĕр-пĕриншĕн вĕсем вута кĕме те хатĕр («Ылтăн вăчăра»). Ваççапа Сережа, Юрăпа Коля – вĕсем те алран-ал тытăнса

çапăçаççĕ тăшманпа («Пĕр хулара»). «Салтак ачисенчи» яшсем те çавнашкалах темелле – хурçă пек çирĕп туслăх шăратса колхоз хирĕсенче тăрăшаççĕ, фронт валли ăшă тум-тир, апат-çимĕç хатĕрлеççĕ.

Тĕп геройсем – Евгенипе Аркаш – хăйсен чĕлхине эстонпа белорус ачисене вĕрентеççĕ, тăван сăмаха, тăван культурăна тата тăрăшарах упрама хăнăхаççĕ. Пысăккисем вырăнне тăрса ĕçлесси çăмăл мар, выляс та, ытларах çывăрас та килет ачасен, анчах хăйсене хытăрлаççĕ çамрăксем: ана-çаран сухаламалла, лаша е плуг тытса пыма хăнăхмалла. Гитлера тĕп тăвас сӳнми ĕмĕт вĕсене шанăç та тĕрек те парать. Вĕсемпе çумăн сăнланнă аслисен сăнарĕсем те ĕненмелле. Вĕсенчен вĕренмелли нумай ачасен. Колхоз председателĕ Назар Егорчă кăмăлĕпе çирĕп кăна та мар, ырă та таса. Пауль Киккас эстонец та çутă чунлă, пысăк ĕмĕтлĕ. Вăл та йывăрлăх умĕнче алă усмасть.

Яланхиллех хăй хывакан тĕнчен романтикăллă икĕ енлĕхне асăрхама манмасть писатель. Тăрăшуллă та хастар, тӳрĕ те таса чунлă геройсене тепĕр енлĕ сăнарсем хирĕç тăраççĕ. Аркашпа Евгение Палля антитезăллăн хирĕçлет: вĕренессе начар вĕренет вăл, ĕçрен пăрăнма тăрăшать, вĕçĕмех пуçтахланса çӳрет. Амăшĕпе куккăшĕ те çав сĕмлех ун: пĕри сăмакун юхтарса сутă тăвать, тепри вăрă-хурахла хăтланса пурăнать. Анчах хăй ӳсĕмĕнчи юлташĕсен туслăхĕ, вĕсен ăмăртуллă ĕçĕ кунашкал ачасене те тӳрленме пулăшать.

Вăтам жанрăн асăннă енĕсем ытти повеçсенче те тупăнкалаççĕ. «Партизан Мурат», «Кăсăя», «Юманлăхра çапла пулнă» евĕр хайлавсенче те детективпа приключени пĕрлĕхĕ тухăçлă, сатирăпа пăтăрмах пĕрлешсе «ĕçе кĕни» ăнăçлă. Сюжет йĕрне «Кăсăя» повеçре, сăмахран, дивизи хаçачĕн корреспонденчĕ каласа кăтартнă пек йĕркеленĕ. Агаковăн калавçисем каллех корреспондентсем, дневник евĕр блокнота курни илтнине çырса пыракансем. Ку сăнар вăл писательшĕн яланах пулăм теме те юрать. Калавçă Телегин разведчик

тата медсанбатра ĕçлекен Наташа Синичкина хушшинчи çыхăнусене йĕрлет.

Пĕри теприн умĕнчи парăма татнă евĕр сыпăнаççĕ событисем: малтан Телегин тырă хушшинче выртакан йывăр аманнă хĕре çăлать, кайран Телегин аманать, ăна Кăсăя пулăшать. Пĕчĕк те вăр-вар хĕре медсанбат ĕçченĕсем, Синичкина хушамата ансатлатса, çапла чĕнеççĕ. Вăр-вар кăна та мар, хастар та вăл, хăюллă. Аманнă салтаксене пăхнă чух нимĕç шпионне тытма пулăшать, Хĕвел тухăç Пруссире чух нимĕç ачине вилĕмрен çăлать. Повеçре писатель санбатăн кулленкунхи ĕçне аван пĕлни куçа ӳкет, «Шанчăк» романра ку тата туллирех палăрать. Каллех саманан социаллă паллисем тĕпе килеççĕ, вăçăри, вăрçă хыççăнхи саманана прозаик аналитикăллă халпа калăплать.

Вăрçă çулĕсем Агаков пултарулăхне çĕнĕ сывлăш вĕрсе кĕртеççĕ. Шаймăклăх героикăллă вăй-хавал туянать, лирикăпа романтика тӳпи палăрмаллах ӳсет, сăнланă ĕç-пуç ăшă иронипе шăварăнать. Сăлтавĕсем паллă: ку тапхăр, 30-мĕш çулсемпе ганлаштарсан, пачах урăхла. Хăрушă вăрçă терчĕ-хурĕ пĕрлештернĕ çынсем пĕрне тепри ăшă кăмăл, ырă сăмах парнелеме ӳркенмеççĕ, пĕрне-пĕри палламанскерсемех уçă чунлăн калаçса каяççĕ. Илемлĕ прозăра та çавна май, хайхискер, вăрçăри пĕр-пĕр паттăр, тылри хастар ĕçчен каласа пани, герой монологĕ çул ертӳçине çаврăнать. Юн, вилĕм, тылри йывăрлăх, тыткăнри асап, ытти тем-тем витĕр тухнă-тӳснĕ яш-кĕрĕмпе ватă-вĕтĕ пĕр-пĕрин умĕнче хăйсен пурнăç историне аса илеççĕ, чун уççи (вырăсла: исповедь) хываççĕ.

Туртăмĕ ку вăрçăн пĕрремĕш çулĕсенчех вăй иле пуçлать, мĕн 60-мĕш çулсен çурриччenex аталанать. Чун уççиллĕ çакнашкал проза мехелĕ çав çулсенче А.Артемьева, М.Кипеке, В.Игнатьева, каярахпа А.Емельянова илентерет. Л.Агаков та туйса илет психологиллĕ е лирикăллă прозăн хăйне евĕрлĕ тутитехĕмне. Вăл та фронтовик, тăшман тыткăнĕнче пулнă

çын, тылри ĕçчен каласа пани евĕр ăсталанă калавсем нумай çырать. Ĕнтĕ кун пек хайлавсенче ун пăтăрмахлăх, шаймăклăх тӳпи самай чакать, пăтăрмахлă, шаймăклă çаврăнса тухнă событи-эпизода çыравçă çăмăл кулăшпа витерет, лирикăллă сисĕм-туйăмпа сĕтеклентерет. Час-часах çепĕç те евĕклĕ интонаци кун пек чух героикăллă романтикăпа пĕрлешсе каять.

Акă «Хĕр юрри» новеллăнах илес. Ăна та герой-калавçăн монологĕ пек йĕркеленĕ. ...Днепр хĕрне çитнĕ салтаксем аслă шыв илемĕпе киленеççĕ, Гоголь ăна мухтаса мĕн çырнине аса илеççĕ. Сасартăк «улăхра, шурлăхлă вырăнсенче ӳсекен çӳçе тĕмĕсем хушшинче» юрă янăраса каять, «таса шыв юххи пек уççăн» шăнкăртатма тытăнать. Ку – экспозици, калавçă-героя сăмах пама хатĕрленни. Калавçи, монолог хывакан геройĕ – сапер-разведчиксен взвод командирĕ, ламран лама çӳре пуçланă легенда евĕр историпе паллаштарать Днепр хĕрринче ларакансене.

Ĕçĕ «хура виселицăллă ялта» пулса иртнĕ-мĕн, взвод командирне ун çинчен «вăрмантан таврăннă хĕр партизансем каласа панă». Цветники ятлă ял халь çук, ăна гитлеровецсем çĕрпе танлаштарса хăварнă. «...Пĕр çакса вĕлермелли такан кăна фашистсен тискерлĕхĕн символĕ пек тăрса юлнăччĕ», – пуçлать калавçă хăй сăмахне. Контрастлă ăнлав-пулăм ĕретленет: юрă, Днепр илемĕ, чечеке аса илтерекен ял ячĕ тата вăрçă тискерлĕхĕ, хура такан т.ыт.те. Малалла та палăрса пырать контрастлăх: пĕр енче – паттăр хĕр, тепринче – нимĕç офицерĕ.

Хĕр кашни каçах яла килсе кĕнĕ путсĕр оккупантсене питлесе юрă янратать. Комендант-офицер та «мусăкçă», тахçан ылтăн медальпе консерватори пĕтернĕскер. Каçсерен аккордеон тытать, «епрешке вальссем» калать. Тăшман сăнарĕ шалтан, тымартан хирĕçӳллĕ: консерватори пĕтернĕ, анчах вилĕм акса çӳрет, оккупацири çынсене вилсе кайиччен хĕнеттерет; вальссем калать, хăй вара ют çĕрте «хăйне валли чи

лайăх çĕрсем суйлама» пикенет, кунта çĕр улпучĕ пулма ĕмĕтленет. Кĕввисем те ун «пытару кĕвви» майлă. Чĕлхи те пуклак: хăйне сыхлакан полицая вăл «пăхăр çамка» тесе чĕнет, хăй «сысна пек самăр», нимĕçсене питлекен хĕре вара выльăхпа танлаштарма хăять. «Мĕн çинчен юрлать вăл сысна?» – хаяррăн ыйтать полицейскирен. Комендант хăтланкаларăшĕсем тискер те, кулăшла та. Урса кайса шыраттарать хĕре, анчах лешĕ тупăнмасть, кашни каç урăх çĕртен илтĕнет ун сасси: юррисенче вара «партизан, партизанка, полицай, йытă» тенĕ сăмахсем илтĕнеççĕ.

Калав тăршшĕпех пĕр-пĕрин хыççăн черетленсе пыракан событисем ÿкерĕнеççĕ. Гротескланса пыракан комендант сăнарĕ кулăшпа витерĕне пуçлать. Йĕрлесе пăхар-ха ак çав черетленÿ ĕретне. Пĕрремĕш хут яла икке уйăракан çырмаран янăраса каять хĕр юрри: «Тарăр, йытă-фашистсем, хĕрлисем килеççĕ». Комендант «юман юпа пек» хытса тăрать, «пĕрре кăвакарса, тепре хĕрелсе каять». Кĕç «шăнтакан чир ернĕ пек», чĕтреве ÿкет, автомат илсе тухса тĕлсĕр-мелсĕр пере пуçлать. Юрри вара кашни каçах янрать, юрлаканĕ тупăнмасть. «Полицайсене тытса Шаккаса хураççĕ», – мухтать хĕр партизансене.

Анчах хĕре тытса çакаççĕ, юрă илтĕнми пулать; пĕрех вăхăтлăха кăна. Каллех вăйлă сасă янăраса каять, каллех хĕр юрлать. «Кайса пăхăр, çакни юрламасть-и?» – урать комендант. «Юрлать пулсан тепĕр хут персе вĕлерĕр», – хушать хăйне сыхлакансене. Пĕр кÿлĕме чарăннă юрă кĕç татах янра пуçлать, комендант, çав хĕрех юрланине ĕненнĕскер, ăна масара чикме хушать: «Çĕр айĕнчен кăшкăраймĕ», – тет вăл хаярланса. Комендант сăнарĕ авăксерен карикатура сĕмĕ тупса пырать.

Юрă сăнарĕ пĕтĕм калава шăнăрлать. Малтанхи хут калавçă сăмахĕ пуçланичченех янраса каять вăл, такам вăйлă саспа Днепра мухтаса юрлать, ку вара калавçă чунĕнче аса илÿ вăратать. Иккĕмĕш хутĕнче оккупацири хĕр паттăр юрри шăратать, ăна пула нимĕçсем канăçа

çухатаççĕ, кашни каç облава ирттереççĕ. Виççĕмĕш хут илтĕнекен юрă малтанхи хĕр паттăрлăхĕ çĕре ӳкменнине кăтартать. Тăваттăмĕш хутĕнче партизансем юрлаççĕ, хорпа хăватлă, «никам пусарса лартайман юрă» шăрататççĕ. Солопа шăратнă кĕвĕ (пĕччен юрланă юрă), çапла, хăватлă хор юрлани пулса тăрать. Черетленӳ таппи тавăру кĕввине романтикăллă, героикăллă сĕм парать. Комендант тыткаларăшĕ вара карикатура, анекдот пулас енне сулăнать, вăл та черетленӳ поэтики çинче хывăннă, гротесклăн хывăнса ӳкерĕннĕ.

Контрастлă антитеза комендант суя пафослăн хăлаçланнипе вĕçленет. «Унăн пуçĕнче» каллех çак вырăнта çĕр улпучĕ пулса тăрасси: «Темиçе пин гектар çĕр... Вунă-вун пилĕк ял ман алăра пулать... Миллионлă доходсем!» Çунатланса кайнăскер, ташă кĕвви янрата пуçлать путсĕр этем, жандармсем вара ташша çапа пуçлаççĕ. Ку, паллах, вилĕм умĕнхи ахăрашу. Яла партизансем пырса кĕреççĕ, хĕршĕн тавăраççĕ.

Антитеза хутлам-хутламăн, сийĕн-сийĕн хайланать калавра: комендантпа хĕр хире-хирĕçлĕн сăнланаççĕ, комендант каланă епрешке вальссем халăх юрланă паттăрла юрăсемпе контрастлă, нимĕç офицерĕ искусство тĕллевĕсене ăнланни калавçă ăнлавĕнчи юрă пĕлтерĕшĕпе пĕр мар т.ыт.те. Çапах та çак контраст повеçсенчи пек çивĕч конфликт йĕркелеймест. Вăл калавăн героикăллă, романтикăллă хавхине (пафосне) вăйлатать кăна. Офицер вырăнĕ çак калавра хушма пĕлтерĕшлĕрех.

Романтикăллă, лирика сывлăшĕллĕ тепĕр калав – «Куккук». Унта икĕ чăваш каччи фронтăн малти линийĕнче сасартăк чăваш юрри илтсе хавхаланса кайнине кăтартнă. «Куна эпир пачах кĕтменччĕ вара! – пĕлтерет калавçă. – Кĕтме мар, шутлама та пултарайман ун çинчен...Чăваш халăх юрри!.. Чăваш çĕршывĕнчен пин çухрăмра, фронт çывăхĕнчи темле вăрманти пĕчĕк ялта, çак çурри ишĕлнĕ çуртра, тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан çынсем умĕнче, вĕсем çапăçăва кĕме хатĕрленнĕ чух...»

«Куккук» юрă ентешсене пĕр тĕвве çыхать, фронтри хастарлăха ÿстерет. Виçĕ чăваш çынни пĕр-пĕрне часчасах тĕл пулаççĕ, чăваш юррисене аса илеççĕ. Приемникрен шăранса тухакан концерт хавасĕ-вăйĕ вĕсене татах та çывăхлатать.

Умĕнхи калаври пекех, кунта та хайлав идейине юрă сăнарĕ шăнăрлать, чăваш юрри пĕтĕм новеллăна лирикăллă интонаци парать. Ахальтен мар чăваш каччисем Настя ятлă чăваш пикине, музыка училищи пĕтерсе фронта хăй ирĕкĕпе килнĕ хĕре, Куккук тесе чĕнеççĕ. Фашистсем этем чунне выльăхлатас тĕллев тытни эппин – кăлăх нуша. Паттăр салтаксем чун пуянлăхне çĕре ÿкермеççĕ, халăх юрри-сăввине манмаççĕ. Çавна пулах йывăрлăха та парăнмаççĕ вĕсем.

Настя та ав связист пулса тăрать, темиçе фашистпа пĕччен тĕллĕн çапăçса çĕнтерет, чăваш юррине пĕтерме, янрами тума ирĕк памасть, çĕнтерÿччен пурăнасса шанать. «Пурăнатпăр, Настя! – шантараççĕ ăна вашават чĕреллĕ чăваш каччисем.– Эсир Мускаври пысăк театрта юрланине те илтетпĕр-ха!..» Хайлава А.Артемьевăн лирикăллă повеçĕ-новеллипе танлаштарма ал майлă, унта юрă-кĕвĕ, метафора пулакан пĕр-пĕр деталь хайлавсен лирикăллă сывлăшне тытса шăнăрлать. Мĕнле кăтартать-ши çакă? Л.Агаков хăй шыравĕсемпе пĕрре 30-мĕш çулсен стиль пулăхне, тепре 1945–1965 çулсенчи лирикăллă интонацине кăмăлланине.

Кунашкал кăмăл çаврăмĕ Тургенев традицийĕсене вăрçăри, вăрçă хыççăнхи геройсем чуна эмоциллĕн илни те, чăваш культуринчи лирикăлăха тарăннăн ăнкарнин ахрăмĕ те вăл. Пĕрлех, чăваш прози, тĕпрен илсен, сăмах вĕççĕн каламалли хайлавсем пулма хыпăннине ăнланни. Çакăнта, çакăн пек енсем çинче (20-çулсем, вăрçă çулĕсем) хывăнать те пулĕ персоналиллĕ калăп теорийĕ, ун истори хайлас тĕлĕшри вырăнĕ.

## «Шанчăк», «Чи хакли» романсен илемлĕ поэтики

Писатель калăпланă романсем хушшинче «Шанчăк» хайлав та ăнăçлă произведенисен шутне кĕрет. Чылай повеçри евĕрех, кунта та калупа сюжет аталанăвне уйрăм геройсен шăпипе çыхăнтарнă. «Пĕрре, çуркуннере...» Уртемпе Тарас тĕпреччĕ, «Ылтăн вăчăрара» – Ванюшкăпа Санька... «Шанчăкра» мĕн пуçласа вĕçне çитиччен Римма Сурская, Тимофей Сарьялов, Иван Васильевич Васильев-Актай, Андрей Кованый сăнарĕсем ум ертÿçе çаврăнаççĕ. Çак геройсем çине роман нумай сийлĕхĕн палăрăмĕ тиенет. Римма – санитари пуйăсĕ çинче ĕçлекен санитарка, халĕ ăна хăйне те амантнă. Тыла сывалма тухнă май вăл иртнĕ тертлĕ çулсене аса илет, çак асаилÿпе вара чылай сыпăка ытамласа пĕтĕçтерет.

Ку вăл – калăвăн пĕр тĕсĕ, Сурская курнă, ăнланнă, туйнă, вăрçă пурнăçĕ пек ÿкерĕннĕ сăнсем. Сарьялов хăй çинчен хăй каласа кăтартнă пек йĕркеленĕ калав тата субъективлăрах: сĕрме купăссă пулма ĕмĕтленнĕ каччăшăн пÿрнесĕр юлни – чăн-чăн трагеди. Калавçă чĕлхи-пуплевĕнче такама ÿпкелени, тарăхни çиеле тухать, çут тĕнчене те ĕнтĕ герой-калавçă тĕксĕммĕн кăна, пĕр хавассăр хакласшăн. Пурăннин усси те пачах çук уншăн: тытнă ĕмĕте пурнăçлаймасăр пурăннин мĕн пайти? Ку йĕр Римма йĕрĕпе тĕпрен хирĕçле. Хĕр-санитарка санбат хĕрĕсем йывăрлăхсене мĕнле çĕнтернине, кун-çул илемне тĕссĕрлетменнине аса илет. Икĕ юхăма хире-хирĕçлетсе кунта калуçăн тавракурăмĕ (Сарьялов) тупнă тĕнчерен самай аслăрах, анлăрах тĕнче уçать. Вулакан çакна пула пĕр инкекшĕнех пуç çухатма юраманнине аван туйса илет.

Анчах калу капла çеç хайланни çителĕксĕр çыравçăшăн. Хăй вăхăчĕ çитсен Кованый та калавçă пулса тăрать, парашютпа сиксен тăшмансен блиндажне анса тăни çинчен вăл шÿтлĕн каласа кăтартать. Анранă нимĕçсем ăна тухма памасăр уринчен туртсан та

аптрамасть каччă, тăшман аллине те çакланмасть. Хушамачĕ те хăйне тивĕç ун, украинец инкеке парăнма шутламасть, чăваша та (Сарьялова) çаплах паттăр та çирĕп пулма хистет. Çакна кура каярах Риммăпа Андрей Сарьялова çăлма тем-тем шухăшласа тупни, унра чĕр пурнăç кăсăкне вăратма пултарни те ĕненмелле. Ку икĕ герой – аманнисен чунĕсене сиплекенсем. Эппин, ку романра та прозаик малтан тупнă чун уççиллĕ монолог мелĕ патне пырса тухать. Хăй лав культура контекстне шута хывнă, ку вăл Актай сăнарĕнче уççăн курăнать.

Иван Актай сăнарĕ те пĕлтерĕшлĕ калупа сюжетшăн, романăн нумай енлĕхĕпе нумай сийлĕхĕшĕн. Ун сăнарĕ ума вăрçă çыруçи пек сăнланса тухать. Сăмахăн ытармăш тĕшшине туйса илнĕ çыравçă-герой хăйпе çумăн çапăçакан паттăрсем çинчен очерксем тĕрлет. Пĕр енчен пăхсан хăрах енлĕ этем пек вăл – героикăллă приключенисем çинче кăна чарăнать ун куçĕ: Римма чăваш каччине Володя Аруткина хăй юнне парса çăлнине очерклать, салтак пĕççине кĕрсе ларнă минăна тухтăрсем йывăрпа касса кăларнине çыравлать т.ыт.те. Анчах кунта Агаков хăйне евĕр тĕллеве асра тытни те сисĕнет. Романра ӳнерленес пурнăç писателе нумай саслăх, нумай сăпатлăх еннелле тайăлтарать. Актай урлă «Шанчăка» очеркпа тутлăхлантарать.

Курăр-ха: Сурская асаилĕвĕнче, вăл шута ӳкнинче (рассужденире) санитари пуйăсĕн, медперсоналăн кулленхи пурнăçĕ чĕрĕлсе тăрать. Фашистсем бомба тăкнă вăхăтра та операци тума тивет тухтăрсен, хăйсен хĕр тусĕсене те çухатаççĕ санитаркăсем, аманнисене тыла илсе тухнă чух тăшманпа та тĕл пулма тивет. Аманнисем те тĕрлĕрен: пĕри ик урине татсан та хытарать кăмăлне, тепри ик пӳрнине çухатнăшăнах трагеди тăвать пек.

Эппин, Сурская асаилĕвĕ Риммăшăн кăна кирлĕ мар, çак мелпе калуçă вăрçăри лару-тăрупа чун уççиллĕн паллаштарать. Сарьялов калавĕ те хăрах енлĕ çеç мар. Музыкант (ку та тепĕр искусство сăнарне хисепе хуни)

пулнăран пушă вăхăтра вилесем те илсе тухма лекнĕ Сарьяловăн. Вăл ĕç те çăмăл пулман: «Пĕтĕм ăш пăтранатчĕ! – хыпарлать калавçă-герой тусĕсене. – Анчах этем тени теме те хăнăхать – эпир те хăнăхрăмăр». Тепрер чух ытла та хăрушă сценăсем курма тивнĕ. Йывăр осколок ав пĕр санитарăн çур пуç шăммине татса илнĕ. Анчах каярах çав этем мародер пулни палăрать: «гимнастеркин шал енне вăл вун çичĕ пин тенкĕ укçа, кĕьере чиксе çӳремелли тăвата сехет çĕлесе хунă» иккен... Эппин, Сурская асаилĕвĕнчи пекех, кунта та калуçă алли те сисĕнсех тăрать.

Проблематика тĕлĕшпе те нумай енлĕ ку роман. Актай, Римма сăнарĕсем урлă чăвашлăх, чăваш литературин, чăваш культурин ыйтăвĕсене хускатать писатель. Актай Шупашкарпа тачă çыхăну тытать, вăрçăран чăваш хаçачĕ-журналĕ валли материал çитерсех тăрать. Ентешлĕх туйăмĕ те чĕрĕ çак геройсенче, Хĕрлĕ Чутай каччине, Володя Аруткина тĕл пулни вĕсенче тăван тавралăх туйăмне çĕнĕлле ялкăштара пуçлать. Ахальтен мар ăна çăлма Римма хăй юнне парать.

Халăхсем хушшинчи туслăх ыйтăвĕ те курăмлă. Тĕрлĕ повеçсенчех малти вырăнтаччĕ вăл – «Ылтăн вăчăрара» вырăс Ванюшкăпа чăваш Санька туслă, «Пĕр хулари» вырăс ачисем аманнă чăваш лейтенантне сиплеççĕ, «Салтак ачисенчи» çамрăксем эстонецсемпе тата белоруссемпе юлташлă пулаççĕ т.ыт.те. Кунта та çав мехелех – чăваш ятпа çапăçу хирне тухнă Римма Кованый украинецпа туслашать, унпа пĕр пулса чăваш мусăкçине тивĕçлĕ çул çине кăларать. Геройсен моральпе кăмăл-сипет ыйтăвĕ те пысăк проблема – чун çирĕпĕпе тӳсĕмлĕхне харкамçăсем çапăçура, туслă хутшăнусенче туптаççĕ. Стиль тĕлĕшпе те нумай енлĕ çак хайлав – Сарьяловăн пессимизмлă психологине Актайăн героикăллă ĕçсен çыруçи ролĕ хирĕç тăрать, Риммăн лирикăлăхпа оптимизмлă куçкурăмне Актайăн героикăллă романтикипе çывăхлатнă т.ыт.те. Кашни стиль йĕрĕ, проблемăсен кашни палăрăмĕ, нумай енлĕ

калăван кашни пайрăмĕ хăйне тĕллĕ, пĕри теприне пăхăнмасть.

Пултарулăх ĕçĕн интеллигенчĕсем, музыкантсем, актерсем, юрăçсем, писательсем, журналистсем, учительсемпе тухтăрсем çинчен калакан роман 1944 çулхи январьпе февраль кунĕсене çырса кăтартнинчен пуçланать. Апла пулин те 1941–1945 çулсенчи вăрçă тапхăрĕ куç умне анлăн тухса тăрать». Вăрçă сăнарĕ романра тĕрлĕ енлĕ. Ретрен-рет, геройсем курнă пек туса тĕрлĕ симулянтсене сăнланă: «Пĕри тактикăллă занятире аллине тăм илтерет, тепри – хăлхине», тахăшĕ юри ӳксе урине мăкăлтать», малти линие каясран хăтăлать çапла. Çакна аса илекен Римма шухăшĕ-кăмăлĕ вăрçă кӳнĕ терт-шар, аркану-ишĕлӳ тавралла çаврăнать.

Малтанласа хĕре нимĕçсен ӳксе арканнă самолетне курма та çӳçентерӳллĕ. Кайран вăл тĕлсĕр-палсăр перекен самолетсем тăкакан вут айĕнче те аптраса ӳкмест. Чăн та, хăнăхман çамрăк рота чăл-пар сапаланса каять: хăшĕ юр ăшне чăмать, хăшĕ тара пуçлать. «Çакă вăл паника тени пулать те ĕнтĕ», – ăнлантарать рота командирĕ хĕре. «Салтак тĕнне кĕресси» ансат мар-мĕн. Кĕç чăн çапăçу та тытăнать, аманнисем йышланаççĕ. «Юн курма хăнăхма», чуна çирĕплĕх хывма вĕренме тивет Риммăн. Вăл кăна-и? Çывăх тусĕсем – Таняпа Женя – пуç хуни амантать чуна; эппин, çывăх çынсене çухатма та хăнăхмаллах вăрçăра.

Тыла каяс çул çинче те тĕл пулах тăраççĕ хăрушă сценăсем. Тин ирĕке кăларнă ялсенчен пĕринче Римма Тима ятлă ачана курать: куçĕсем чарăлнă, тĕлсĕр, хăй йывăр сывлать, йĕмсĕр çӳрет. Ашшĕ çук, амăшне Германие ăсатнă, хăй кӳршĕсем тăрăх апат ыйтса кĕлмĕçленет, йĕмне нимĕçсем туртса илесрен пытарса хунă. Кӳршĕсем çитерни те çăлаймасть тăнран кайнă мĕскĕн ачана, киле çитсе выртать те, вăйран кайнăскер, тек тăраймасть те.

Çакнашкал сценăсене курсан та чунпа хуçăлса ӳкмест çамрăк хĕр, пурнăç оптимизмне алран ямасть.

Хăйшĕн кăна мар, Сарьяловшăн та, кĕç вилсе выртас Таньăшăн та ăшă кăмăллă хевте тупать. Сывалма Шупашкарти госпитале çитсен телейсĕр мусăкçăна иккĕмĕш хутран сиксе вилесрен хăтарать Кованыйпа пĕрле чăваш хулинче Сарьялов тусĕсене шыраса тупать, лешсене ун патне çӳреме, ăна çăлма ыйтать. Кăмăлĕпе Римма тĕлĕнмелле аслă этем. Вăрçă пуçлансан, хăй савнă çынни фронта кайнине пĕлсен, вăл та хăй ирĕкĕпех вăрçа кайма шут хывать. Хăй чĕрине чăн чăтăмлăх хывса çепĕç чунлă çак хĕр тем те тӳссе курнă салтаксемшĕн те чĕрĕ тĕслĕх пулса тăрать.

Тем пек паттăр пулсан та хăйĕнчи хĕр сăпайлăхне те çухатмасть, ун пирки Актай хаçатра çырма кăмăл тунине пĕлтерсен те ырăмарланать. Андрей Кованый унпа мăшăрланма шухăш тытнине пĕлсен, тивĕçлĕ хурав парать – ун хăй савнă Сергей Пастуховах кĕтесси килет. Тăван çĕршыва та, тăван тавралăхне те чĕререн юратать Римма, шăп вĕсене хӳтĕлеме каять те вăл вăрçа. Вулакан туять: хăй Сергейне кĕтсе илĕ-илех хĕр, унпа чăн-чăн телей тупĕ.

Сарьялов сăнарĕ те ăнăçлă, унра пултарулăх интеллигенчĕсене вăрçă кӳнĕ трагеди туллин ӳтленет. Сĕрме купăса юнпа-чунпа парăннă, консерватори пĕтерни çамрăк пысăк ĕмĕтсемпе çунатланнă. Аманнă хыççăн унăн кăмăлĕ масар еннелле туртăнать. Анчах çывăх та шанăçлă юлташсем тупăнаççĕ ун тĕллĕн, Сарьялов дирижер ăсталăхне алла илет, хăй валли çĕнĕ пурнăç тыткăчи тупать.

Юратура та телейлĕ вăл халĕ, хăй савнă Олимпиада ятлă юрăçпа çемье чăмăртать. Çакна аван ăнланать пулĕ Сарьялов: çумра çывăх юлташсем, ăшă коллектив пур чух этем пĕтмест. Çирĕп çынсем вара ун тавралла питĕ нумай. Крутогоров хирург ăна тӳсĕмлĕ пулма хушать, Шупашкарти тусĕсем унра çутă талант пуррине асрах тытаççĕ, савнă хĕрĕ ăна çĕнĕ çунат парать. Романра ун пĕлтерĕшĕ Риммăнни пекех пысăк мар – ун çинчен вулакан Римма шухăшлани-калаçни, Кованый

сăмахлани урлă ытларах пĕлет. Апла пулин те творчествăри ĕçченĕн хăйне евĕрлĕ шăпи хайлавра харкам хăйле сăпат тупать. Ку вара Агаков ăсталăхĕшĕн ытти искусствăсен пуянлăхĕ пĕлтерĕшлĕ пулни çине шак хурать. Унра эпир ерипен чун суранĕ епле йывăрпа, анчах ӳсĕмлĕн сипленнине куратпăр, искусство ĕçченĕсем вăрçăра мĕн шухăш-кăмăлпа пурăннине ăнкаратпăр.

Тĕпри кашни сăнарах çапла ятарлăн пăхса тухма пулать, кашниех вĕсенчен хăйне тĕллĕ идея шăнăрне тытса пырать. Кованый шăпи те çăмăл мар, пур тăванĕ-пĕтенĕ оккупацие юлнă унăн, вĕсен шăпи пирки çамрăк çын нимĕн те пĕлмест. Çук, пĕрех нăйкăшмасть арçын, хăй çунни-пăшăрханнине çынна кăтартмасть. Сарьяловпа е Сурскаяпа танлаштарсан ку – пач расна характер. Ав мĕншĕн вăл романра Сарьялов трагедийĕ хĕрсе çитнĕ самантсенче тĕл пулать, характерĕ унăн шӳтпе героика çинче хывăнать.

«Шанчăк» роман – чăваш литературишĕн пысăк çитĕнӳ. Кунта приключени те, пăтăрмах та, сатирăллă мехелтен пăрăнаççĕ, героикăллă, легендăри евĕр событисемпе çыхăнаççĕ. Повеçсенчи евĕрех, роман та событисен хивре аталанăвĕ çине таянать. Событисен таппи питĕ курăмлă, вĕри; кашни событи сюжет аталанăвĕнче тăтăш ахрăмланать. Пĕрремĕш эпизодах ак (Сарьялова санитари пуйăсне илсе кĕни, вăл кăмăлпа хуçăлса ӳкни) пĕтĕм романа витерет. Римма Володя Аруткинпа паллашни, ăна юн парса çăлни те хайлав юхăмĕнче тăтăшах тĕл пулать. Мĕнпурĕ ку çак хайлава пысăк оптимизмлă произведени тесе хаклама май парать.

1974 çулта çыравçă «Чи хакли» роман кăларать. Хайлав сюжечĕ нумай сийлĕн аталанать, романтикăллă антитеза, приключени мехелĕ çураçтармасть кунта автора. Кагаева (ялти сутуçă) тавар хакĕсене ӳстерсе сутать, тĕрлĕ сăтăрçăсем стройкăран вăрласа тухнă материала машинĕ-машинĕпе йышăнса юлать, кайран

вĕсене те хаклăпа ярăнтарать. Героиньăн çакнашкал хăтланкаларăшĕсемпе çыхăннă сюжет пăтăрмахпа приключенирен сĕткен илет. Чыса, халăх умĕнчи тивĕçе мала хуракан хĕрсен сăнарĕсем Кагаевăн тӳнтерле йăлисене хирĕçле. Вĕсене иккĕшне те чун пурнăçне кăтартни, лирикăри кăмăл-туйăма палăртни урлă ӳкернĕ. Чатта поэтăн та сюжетри йĕрĕ хăйне евĕрлĕ. Вăл айван ача пек таса, ырра ытла та шанать. Анчах ултав-суяпа тĕл пулсан пĕр иккĕленмесĕр çапăçăва ыткăнать. Кагаева эшкерĕнчи сăтăрçăсем хĕнесе хăварни те пăраймасть ăна тĕрĕс çулран. Сумбатов милицин те, райпо председателĕнче ĕçлекен Фроловăн та хăйле вырăнĕ-пĕлтерĕшĕ пур. Вĕсем романри конфликт çивĕчлĕхне ӳстерсех пыраççĕ.

Кирăпа Лариса яла «аякран», урăх вырăнсенчен килнĕ персонажсем. Сюжет аталанăвĕшĕн ку питĕ ал майлă: тĕрлĕ кăлтăк-шăйрăка, ӳсĕр-какăра, сăтăрла ĕçсене вĕсем çавăнпа ыттисенчен çивĕчрех кураççĕ. Калу та çавна пула час-часах çак геройсем курнă ĕç-пуçпа çыхăнса пырать: акă хĕрсем столовăйĕнчи буфетчицăна сăнаççĕ, ӳсĕрсем çапăçнине кураççĕ; ак райпо председателĕпе, ырă чунлă Фроловпа сăмахлаççĕ; ак вĕсемех чайнăйри официантка калавне тăнлаççĕ... Инна официантка тĕрлĕ ирсĕрлĕхе курса йăлăхса та çитнĕ, никама та шанмасть. Ĕненме пулать: продавщицăра ĕçленĕ чух ăна улталаса чутах хуптарман...

Ку вăл – экспозици, романри ĕç-пуç мĕнле, мĕнрен, çыхăнса каяссине хатĕрлени. Суту-илӳре ĕçлесси питĕ йывăр иккен, çакна хĕрсем тӳрех ăнланса илчĕç, хăйсем умне татăклă ыйту лартрĕç: «Нивушлĕ вара эпир вăрлама, тавар илекенсене улталама... пултаратпăр?» Тӳрех çивĕч те тăкăс, хире-хирĕçле лару-тăрăва кĕрсе ӳкеççĕ геройсем: Фролов тӳрĕ кăмăллăха, ырăпа ĕçлеме май пуррине ĕненет, Иннăшăн – суту-илӳре ултавçă мар пĕр этем те çук. Малалла та çаплах йĕрленет конфликт таппи: ултавçă Кагаевăпа çуммăн тăлăх, таса кăмăллă, телейсĕр шăпаллă Христин сăнарне ӳкерсе панă.

Христина та пĕлет: Кагаева хапсăнчăк, ултавçă, сăтăрçă, кахал, хаяр. Анчах унăн ниçта кайма çуккипе Кагаева патĕнчех тăрмашма тивет. Тӳнтер сăнлă сутуçă тавралли лару-тăру, çапла, тăкăскалансах пырать – çĕр варринче ун патне вăрланă тавар кӳреççĕ, кунашкалли (Христин каланă тăрăх) яланах пулать иккен; эрех илес текенсенчен вара сутуçă ытларах шăйăрать-мĕн т.ыт.те. Анчах майĕпен Ларисăпа пĕр шухăшлă çынсем те тупăнаççĕ: Чатта поэт, шкул учителĕ Цветков. Вĕсем Иннăпа Христин пек çемçешке мар, тĕрĕслĕхшĕн çине тăма пултараççĕ. Çакăн пек кĕрешӳре тĕрĕслĕх тупăнать, Кагаева йышшисен суд сакки çине ларма тивет.

Литературăн теориллĕ историйĕ, Ю.Миниралов каланă тăрăх, илемлĕ хайлавра самана, истори сăнарне курать, нимрен ытла хайлавра ĕç-пуçăн социаллă, историллĕ ăшĕ-чиккине ӳтленет. Ку ĕнтĕ Л.Агаков пултарулăхне те тивĕçет. Эпохăсен черетленĕвĕ (20–30 çç., 1940–1970 çç.) сăнарланнă пурнăçăн результачĕ пек мар, процесс пек палăрса пырать. Çавăнпа жанр хывăмĕ те чĕрĕ юхăм: очерк калава куçать ун, малтан блокнотра палăртса хунă тĕрленчĕксем повеçе кĕрсе вырнаçаççĕ. Вăхăт, истори, самана сăнарĕсем яланах динамикăллă Агаковăн, куçăмлă. Геройĕ те, стилĕ те, жанр хывăмĕ те, композици тытăмĕ те писатель прози витĕр шăранса тухакан процесс.

Агаков тавракурăмĕ пысăк пулнă, вăл несĕп (мораль) тасалăхĕшĕн нумай кĕрешнĕ, этем чунĕнчи çутă ĕмĕте, мухтакан вуншар хайлав ăсталанă. Хăй ĕçĕ-хĕлĕпе писатель паян та пин-пин çамрăкшăн паха тĕслĕх, çул ертӳçĕ пулса тăрать.

**Тупмалли**

*3*
Умсăмах

*8*
Çыравçă кун-çулĕнчен

*25*
Леонид Агаковăн илемлĕ тĕнчи

*50*
«Шанчăк», «Чи хакли» романсен илемлĕ поэтики

**Федоров Георгий Иосифович**

**ЛЕОНИД АГАКОВ:**
**художественное осмысление действительности**

*Монография*

Подписано в печать 20.04.2010. Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Печать оперативная. Гарнитура TimesET Chuvash.
Физ. печ. л. 3,75. Тираж 100 экз. Заказ № 142.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46. E-mail: newtime1@mail.ru.

30.00